# Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр!

ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

19 (4433) №, 2015, май / çу / , 7
(1931 çулхи январĕн / кăрлачăн / 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНТЕРӲÇĔ САЛТАК

## «Иртнĕ çулсем куç умĕнчех...»





**Çуркуннехи хитре çанталăкра Пушкăрт Республикин Авăркас районĕнчи Çĕньялти тăхăр теçетке урлă каçнă Владимир Евстафьевич Романов вăрçă ветеранĕ пӳртре ларма пултараймасть. Пӳлĕмре хăй çитĕнтерекен лимона шăварать те сад пахчине тухса уçăлса çӳрет. Йывăççене аллисемпе сĕртĕнсе вĕсемпе калаçма та ӳркенмест. Тутлă шăршăллă çеçкесем çине пыл хурчĕсем сĕрлесе вĕççе ларнине юратса пăхать. Сулхăнра хаçат-журнал вулама кăмăллать тата! Çитменнине Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине халалласа мĕн тĕрлĕ материал пичетленмест пулĕ юратнă кăларăмĕсенче. Халĕ вăл «Тантăш» хаçатпа та туслă. Ăна юратнăранах çырăнса илет.**

Нумай пулмасть Çĕньял шкулĕн вĕренекенĕсем ун патне хăнана пырса кайрĕç. Сăвăсем каларĕç, юрăпа савăнтарчĕç.

– Эх, тахçан хам та сирĕн пек ача кăначчĕ. Ĕнтĕ вăл вăхăтсем хыçа юлчĕç. Тавах килсе çӳренишĕн, мана асра тытса хисепленĕшĕн, – терĕ июль уйăхĕн 11-мĕшĕнче 92 çул тултаракан вăрçă паттăрĕ.

Хăй те сисмерĕ Владимир Евстафьевич, куçĕ умне ачалăх çулĕсем тухса тăчĕç... 1930 çулхине шкула вĕренме кайнă вăл. Унччченех вулама пĕлнĕскер ытти ачасем саспаллисемпе епле паллашнине тимлĕ итлесе-пăхса ларнă. Иккĕмĕш класра тăрăшса хутлав таблици вĕреннĕ. Вырăс тата чăваш чĕлхи, физкультура урокĕсене те кăмăлласа çӳренĕ. Пĕррехинче вĕрентекен:

– Халĕ музыка урокĕ ирттерĕпĕр, – тесе хыпарланă.

Пĕчĕк Володя савăннипе кăшкăрсах янă.

– Туй юрри юрлатпăр-и? Чăнахах-и? – хăпартланнă çунатлансах.

Арçын ачан сассине илтсен кӳршĕ пӳлĕмри тăваттăмĕш классем ахăлтатса кулнă. Володя аванмарланнă. Ара, çак таранччен вĕсен рисовани, музыка урокĕсем пулман-çке. Çавăнпа туй юррисемсĕр пуçне урăххисем пулнине чухлама та пултарайман вăл.

Кĕнекесем, тетрадьсем çукран вĕренекенсене çав тери йывăр килнĕ. Хаçат страницисем çине çырнă. Çуллахи вăхăтра ахаль ларман Володя. Çăпата туса Талпас пасарне васканă. Пĕр мăшăрне 20 пуспа сутнă та лавккана кĕнекесемпе тетрадьсем туянма чуптарнă.

Алли те ылтăн пулнă арçын ачан. Ун чухне, хĕллехи кун, икĕ юлташĕпе Дубровка вăрманне юрăхлă вĕрене пăхма кайнă. Каçхине ял хĕрринчи çуртра чарăннă, таврана каç сĕмĕ çапсан вăрмана шăппăн кĕрсе куç хывнă йывăça каснă. Çĕçĕпе тата пуртăпа усă курса тĕлĕнмелле хитре сĕрме купăс ăсталанă. Лаша хӳринчен хĕлĕхĕсене тунă. Ашшĕн паллаканĕ пĕррехинче сĕрме купăса пăсса хунă. Арçын ачан кăмăлĕ хуçăлнă, анчах йывăра илмен.

– Ку япала сана вĕренӳре кансĕрлет çеç, – тенĕ кĕскен.

...1942 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнче Владимир Евстафьевич фронта тухса кайнă... Унтанпа шыв-шур нумай юхнă. Хастар салтак асĕнчен иртнĕ çулсем паянхи кун та тухма пĕлмеççĕ...

*Элиза ВАЛАНС.*



**Çитес номерсенчен пĕринче Владимир Евстафьевич Романов вăрçă ветеранĕпе тĕплĕнрех паллаштарăпăр.**

# Кивĕ сăнӳкерчĕк пуянлăхĕ



«Çырнисенчен нимĕн те сăнӳкерчĕк тĕрĕслĕхĕпе танлашаймĕ», – тенĕ французсен философĕ Ролан Барт. Çак сăмахсен чăнлăхне паян кашниех туять пуль. Калав-юмах вуланă чухне те, истори кĕнекине тытсан та эпир тӳрех ӳкерчĕкне шыратпăр вĕт. Çаплах пирĕн асатте-асаннесен вăхăтĕнчи е унран та маларах тунă сăнӳкерчĕксем те питĕ нумай калаcа параççĕ.

Шăпах çакна тĕпе хурса Муркаш районĕнчи Юнкă шкулĕнчи 2-мĕш класра «Кивĕ сăнӳкерчĕк» темăпа класс сехечĕ иртрĕ. Елена Григорьевна Яндушкина вĕрентекен ачасене çавра сĕтел хушшине пуçтарчĕ те пĕрре пăхсан ахаль пек курăнакан кивĕ сăнӳкерчĕксене тимлĕрех сăнама хистерĕ. Класс ертӳçи палăртнă темăн пĕлтерĕшне анлăлатма, кашни сăнӳкерчĕк вăрттăнлăхне уçса пама тăрăшрĕ. Тин кăна хаваслăн ахăлтатса калаçакан ачасем те сасартăк тарăн шухăша путрĕç. Настя Сидушкина кивĕ сăнӳкерчĕксем таса туйăмлă пулнине палăртрĕ. Ульяна Никольскаяна вара ĕлĕкхи çынсем мĕнле пурăнни яланах кăсăклантарать. Вĕсен тумĕсене сăнаса хĕрача питĕ тĕлĕнчĕ.

– Вăрçă вăхăтĕнче тăшман самолечĕсем айăпсăр çынсене нумай пĕтернĕ. Кунта çав çулсенчи сăнӳкерчĕксем те пур. Эпир тылра ĕçлекенсене куратпăр. Çăкă маншăн питĕ интереслĕ, – терĕ Кирилл Макаров.

Кирилл Шишкин вара ĕлĕкхи хĕрарăмсем шурă кĕпепе, шурă тутăрпа çӳренинчен тĕлĕнет, çапла тирпейлĕ çӳренĕшĕн вĕсене мухтать те.

Елена Григорьевна вĕренекенсен шухăшĕсемпе паллашсан питĕ кăмăллă пулчĕ. Эппин, вăл калас тени ачасем патне çитнех.

– Иртнĕ çулсенчи самантсене нумай чухне кĕнекесенчен кăна пĕлетпĕр, – тет Ирина Григорьевна. – Сăнӳкерчĕк вара çав вăхăта лайăхрах сăнлать: ун чухнехи йывăрлăхсене, тыткаларăшсене туллинрех уçса парать. Чăвашсем питĕ лăпкă, хитре, сăпайлă пулни унта тӳрех курăнать. Акă кунта çынсем йăлăмра ĕçленине кăтартнă. Акă тата çынсен сăнĕсенче вăрçă ахрăмĕ йĕрленнĕ. Çак сăнӳкерчĕксене пăхнă вăхăтра ачасен куçĕнче те хурлăх туйăмĕ сисĕнчĕ.

Иккĕмĕшсем çак япала малашнехи ăрусемшĕн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланчĕç, кивĕ сăнӳкерчĕке яланах хисеплеме шантарчĕç.

***Лариса ПЕТРОВА.***

# Ташлакан «иккĕ»



Каçхи шăплăх. Вĕрентекен каллех сĕтел умĕнче ачасен тетрачĕсене черетпе уçа-уçа хупать. Тĕрĕслев ĕçĕ ирттернĕччĕ паян. Ыран вĕренекенсем унăн пĕтĕмлетĕвне кĕтеççĕ ĕнтĕ. Кунĕпе ывăнни, тарăхни паçăрах иртсе кайнă. Пĕри ĕçе тĕплĕн пурнăçлани палăрать, хăшĕ-пĕри вара темăна ăнланса çитереймен пулмалла. Математика учителĕ ĕçĕ çăмăл маррине тахçанах туйнă-ха. Теорема, аксиома вĕренмесен малалла задачăсен шутлама кăткăсланать. Анчах та Саша пек япăх шутлама пĕлекен урăх пулман. Мĕнле паллă лартас? Ыттисем умĕнче намăс пулать вĕт ăна.

Анчах паллăна лартмаллах. Ачан ĕçне хакламалла. Вăл кирек мĕнле пулсан та. Нихăçан та начар паллă лартман вĕрентекеншĕн ку питĕ йывăр. «Иккĕ» паллăна хăйне евĕрлĕ çырмалла», – шухăшларĕ учитель. «Иккĕ» паллăн пуçне, куçне, кĕлеткине, алли-урине ӳкерчĕ. Халĕ вăл тетрадьре саркаланса çеç ларать. Тетрадь листинчен халь-халь чупса тухас пекех туйăнать.

Вĕрентекенĕн пуçĕнче шухăш явăнать: «Мĕн шухăшлĕç-ши ачасем?» Çĕрĕпех куç хупаймарĕ вăл, ыранхи пирки шухăшларĕ, вĕренекенсене çак пулăма мĕнле ăнлантармалли пирки пуçне ватрĕ. Анчах хуравне пĕрех тупаймарĕ-ха...

Математика урокĕ пуçланчĕ. Вĕрентекен класа хумханса кĕчĕ. Тетрадьсене валеçсе парсан ачасен куçĕсенчен пăхрĕ. Паллăсене журнала лартма пуçларĕ. Саша нимĕн те шарламарĕ. Вăл хăйне мĕнле паллă лартнине те ăнланма пултараймарĕ. Класри чи йăрă хĕрача умне хăш самантра пырса тăнине те сисмерĕ. Тĕлĕнмелле паллăна асăрхарĕ те хавассăн кăшкăрса ячĕ:

– Саша, санăн ку – ташлакан «иккĕ» пулĕ! Епле илемлĕн саркаланса ташлама хатĕрленнĕ. Вăл сан тетрадьре нумаях тытăнса тăрас çук, часах унтан тухса кайĕ. Çакна шута илмелле санăн. Япăх паллă илнĕ пулсан та ан кулян! Мария Ивановна, мĕнле интереслĕ паллă ара ку?

Хĕрача сассине илтсе пурте Саша тавра пухăнчĕç. Ташлакан «иккĕне» тетрадьрен тухса тариччен пурин те курас килетчĕ. Вĕрентекен ачасене шăпланма хушрĕ. Урок пуçланчĕ. Пурин те пуçĕнче тĕрлĕрен шухăш явăнчĕ. Вĕсем пĕрре юратнă вĕрентекенĕнчен тĕлĕнчĕç, тепре ăна мухтарĕç.

...Вăхăт шурĕ те шурĕ. Темиçе хĕлпе çу та ылмашăнчĕ. Вĕренекенсем çулран çул ылмашăнсах пычĕç.

Пĕррехинче шкула çамрăк салтак килчĕ. Вăл тӳрех Мария Ивановнăпа тĕлпулма васкарĕ. Питĕ пăлханчĕ яш, анчах çакна пытарма тăрăшрĕ. Мĕн калĕ-ши ăна юратнă вĕрентекенĕ? Мария Ивановна Сашăна курсан тӳрех хăйĕн ытамне илчĕ, савăннипе куççульленчĕ те. Шкул ачисем çак тĕлпулăва кашни тĕрлĕрен ăнланчĕç, никам та кансĕрлекен пулмарĕ вĕсене.

Саша кăкăр умĕнчи кĕсйинчен темĕскер кăларса пăлханнипе чĕтрекен аллисемпе учительницăна тыттарчĕ.

– Мария Ивановна, илсемĕр эпĕ 7 çул упранă парнене. Ăна службăра та кăкăр çумĕнчех усрарăм. Халĕ ăна сире каялла таврăса парас тетĕп. Тен, ун пирки эсир манса та кайнă пулĕ. Çак ташлакан «иккĕ» мана пурнăçра хамăн вырăна тупма пулăшрĕ, çул кăтартса пычĕ тейĕн. Тен, вăл тата кама та пулин кирлĕ пулĕ? Тавтапуç сире, юратнă вĕрентекенĕм, – терĕ те кĕтессисене типтерлĕн каснă хут листи пачĕ.

Мария Ивановна парнене алла илсен чăтса тăраймарĕ. Тепĕр хут салтака çупăрларĕ, куçĕсем каллех шывланчĕç.

Çакăн пек сăмахсене пысăк чĕреллĕ, ырă та анлă тавракурăмлă çын çеç калама пултарать-çке. Апла пулсан вăл хăйĕн йăнăшне ăнланнă. Кӳренмен вăл вĕрентекене. Ташлакан «иккĕ» ăна çитĕнӳсем тума хавхалантарнă, кăмăл-туйăмне çирĕплетме те пулăшман мар. Апла, вĕрентекен ачан чунне амантман, пушшех тепĕр майлă – ăна çирĕплетме пулăшнă.

– Тавтапуç сана, Саша, мана кӳрентернĕшĕн. Эпĕ саншăн чунтан савăнатăп, – терĕ вĕрентекен савăнăç куççульне шăлса.

***Алевтина ИВАНОВА, вĕрентекен.***
Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа.

**СИМĔС ПЛАНЕТА - 2015**

# Дима призер тата Саша ĕмĕчĕ

Республикăн «Шкул тулашĕнчи ĕçсен «Эткер» центрĕнче», Шупашкарта, Раççейри Литература çултталăкне халалланă «Симĕс планета - 2015» Пĕтĕм тĕнчери ача-пăча экологи форумĕн республика тапхăрĕ иртрĕ. Унта республикăри пур муниципалитетран 1164 ытла ĕç килсе çитнĕ. Мăн Этмен шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренекен Дмитрий Шалтайкин та /ертӳçи – Т.В.Горбунова/ форума хутшăнчĕ, «Вăрман пурнăçĕ тата çынсен шăпи» номинацире иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Дима Л.Н.Тверсков вăрманçăпа калаçса вăл хăйĕн пурнăçне çутçанталăка халаллани çинчен статья çырнă.

Нумаях пулмасть Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче çамрăк космонавт отрячĕсен «Пире космос инçечĕсем чĕнеççĕ!» тăххăрмĕш республика слечĕ иртрĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчен çак уява хутшăнма Александра Никифорова, Алена Шуськина тата Анастасия Артемьева тивĕçрĕç. Вĕсем унччен Космонавтика кунне, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистсене çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалланă район тата республика конкурсĕсенче çĕнтернĕ, Ача-пăча пултарулăхĕн çуртĕнче хушма пĕлӳ илеççĕ.

2014-2015 вĕренӳ çулĕнчи республика конкурсĕсене пĕтĕмлетнĕ май Александра Никифоровăна, Алена Шуськинăна тата Анастасия Артемьевăна çамрăк космонавтсен «Çăлтăр» аслă категорине парнелерĕç.

Саша питĕ пултаруллă хĕрача. Улттăмĕш класра вĕренет пулин те шкулта, районта ирттерекен кашни мероприятие хутшăнма тăрăшать. Пур çĕрте те маттисен ретне лекет вăл. Çак слета кайма та тĕплĕн хатĕрленчĕ. Инкĕшĕ ăна хăй çĕленĕ ятарлă тумпа тивĕçтерчĕ.

Уява Республика Пуçлăхĕ Михаил Васильевич Игнатьев та хутшăнассине пĕлсен тем пекех хĕпĕртерĕ хĕр пĕрчи. Ара, паян ăна питĕ çывăх курать-çке. «Унпа юнашар тăрса сăнӳкерĕнсен чи телейли пулăттăм», – терĕ Саша. Анчах Михаил Васильевич ун умĕнчен иртсе кайсан хĕрача кулянса ӳкрĕ. «Эх, ĕмĕтĕм пурнăçланаймарĕ», – терĕ сасăпах çакна хăй те асăрхамасăр. Ку сăмахсене илтнĕ Элтепер каялла вăртах çаврăнчĕ те: «Санăн ĕмĕт пур-и?» – терĕ Сашăна. Асăнмалăх сăнӳкерĕнни хĕрачана мĕн тери çунатлантарчĕ.

«Сирĕн ырă шухăшсем, ĕмĕтсем тата нумайрах пулччăр», – терĕ Михаил Васильевич Сашăпа сывпуллашнă май.

***Татьяна ГОРБУНОВА.***

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1799 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1712
Пичете май уйăхĕн 6-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

(Р) паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Туслӑх хӗлхемӗ





Вӗрентӳ институтӗнчи чӗлхе кафедри тӑтӑшах тӗрлӗ ӑмӑрту, конференци, фестиваль ирттерет. Нумай пулмасть «Туслӑх хӗлхемӗ» фестиваль иртрӗ. Программӑна чӑваш тата вырӑс шкулӗнче вӗренекенсем валли чӑваш чӗлхи тата культурипе ирттерекен «Ҫӑлтӑрчӑк» вӑйӑ-конкурс, «Шевле-2015» ӳнер ӑсталӑхӗн ӑмӑртӑвне кӗртнӗ.

– Ҫултан ҫул конкурс аталанса пырать тесе шутлатӑп. Вӗренекенсене халӑх культурипе, ӑс-хакӑлӗпе, шухӑш-кӑмӑл пуянлӑхӗпе тӗплӗнрех паллаштарас, тӗпчев ӗҫне явӑҫтарас килет. Ара, пирӗн малашлӑх ҫак хас-тар та пултаруллӑ ачасенче, – терӗ жюри членӗ – Анна Семеновна Егорова.

Фестиваль пилӗк станцирен тӑчӗ: 1. «Чӗлхе – халӑх мулӗ» /ытларах чӗлхе правилисем/. 2. «Чӑваш халӑхӗн нумай ҫӑлтӑр: Ҫеҫпӗл, Иванов…» /литература ыйтӑвӗсем/. 3. «Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ» /ваттисен сӑмахӗсем, тупмалли юмахсем…/. 4. «Илемлӗх тӗнчи» /чӑваш литератури классикӗсен тата юбилярсен хайлавӗсене илемлӗ вулани/. 5. «Пирӗн пултарулӑх» /ачасен пултарулӑх тупӑшӑвӗ/.

Малтан ҫак фестиваль район тапхӑрӗнче иртнӗ. Пултаруллӑран та пултаруллисем республика шайне тухма тивӗҫнӗ. Кунта та кашни станцинчех хӑйсене яваплӑн тытрӗҫ.

– Ыйтусене пурне те хуравлама тӑрӑшрӑм. Паллах, пӗлменнисем те тӗлпулчӗҫ. «Илемлӗх тӗнчинче» Любовь Мартьяновӑн сӑввине вуласа парӑп. Эпир кунта кашниех сӑвва хӑй мӗнле ӑнланнӑ пек вулатпӑр. Ҫавӑнпа та питӗ интереслӗ ыттисен пултарулӑхне курса ларма. Ҫакӑн пек фестивальсене, ӑмӑртусене тӑтӑшах хутшӑнатӑп. Кашнинчех мӗн те пулин ҫӗннине пӗлетӗп, – терӗ Ҫӗмӗрле районӗнчи Юманай шкулӗнче саккӑрмӗш класра вӗренекен Инесса Федорова.

Фестивале пурте хастаррӑн хутшӑнчӗҫ. Ӑмӑртӑва пӗтӗмлетнӗ май хула шкулӗсенче вӗренекенсенчен ҫӗнтерӳҫӗ ятне ҫаксем тивӗҫрӗҫ:

I. Анита Маркова /Вӑрнарти 1-мӗш шкул/.

II. Анна Кадушкина /Шупашкарти 10-мӗш шкул/.

III. Надя Козлова /Красноармейски шкулӗ/, Дария Дюкина /Патӑрьелти 2-мӗш шкул/, Салампи Прокопьева /Шупашкарти 39-мӗш шкул/.

Ял шкулӗсенче вӗренекенсенчен малтисен йышне ҫаксем кӗчӗҫ:

II. Елена Никандрова /Элӗк районӗнчи Юнтапа шкулӗ/.

III. Юля Павлова /Канаш районӗнчи Чакаҫ шкулӗ/, Снежана Филиппова /Вӑрнар районӗнчи Туҫи Ҫармӑс шкулӗ/ .

Анастасия Авакова /Вӑрмар районӗнчи Кавал шкулӗ/, Наташа Андреева /Тӑвай районӗнчи Тӑрмӑш шкулӗ/.

– Питӗ кӑсӑклантараҫҫӗ мана ҫакӑн пек фестивальсем. Ачасене сӑвӑ вуланине итлеме кӑмӑллатӑп. Хам сӑвӑ ҫырма юратнӑран та пуль. Ачасене, вӗсен тыткаларӑшӗсене курса мӑнаҫланса ларатӑп. Хушӑран ҫан-ҫурӑм тӑрӑх сивӗ те чупать, – каласа парать Елчӗк районӗнчи Патреккел шкулӗнче тӑххӑрмӗш класра вӗренекен Женя Сардаева.

– «Шевле-2015» уйрӑм ял шкулӗсем валли иртрӗ. Ӳнер ӑсталӑхӗн ӑмӑртӑвне 15 шкул хутшӑнчӗ. Вӗсен хушшинче ултӑ ачана малти вырӑнсемпе тивӗҫтертӗмӗр. Чӑн та, питӗ нумаййӑн хутшӑнчӗҫ конкурса. Суйлама та ҫӑмӑлах пулмарӗ. Литература произведенийӗсене вуласа содержанийӗ тӑрӑх ӳкерчӗк тумаллаччӗ. Пӗрремӗш вырӑна Канаш районӗнчи Шӑхасан шкулӗнче вӗренекен Артем Николаев ҫӗнсе илчӗ. Иккӗмӗшне Светлана Васильевӑпа Наташа Симбирева тивӗҫрӗҫ. Виҫҫӗмӗш вырӑнта – Маша Краснова, Катя Ертмакова тата Саша Гаврилова, – терӗ паллӑ художник Станислав Юхтар.

Фестиваль вӗҫӗнче Анна Семеновна Егорова ҫӗнтерӳҫӗсене саламларӗ. Пур вӗрентекенпе вӗренекене тав сӑмахӗ каларӗ, татах та ҫакӑн пек хастаррӑн хутшӑнма сӗнчӗ.

*Кристина БАЙБАТОРОВА.*

# Тӑван чӗлхене юратса



Чекмагуш районӗнчи Юмашри вӑтам шкулта тӗрлӗ халӑх ачи пӗлӳ илет. Тӑван чӗлхе урокӗсене кунта икӗ ушкӑна пайласа вӗрентеҫҫӗ. Чӑваш тата тутар ачисем тӑван чӗлхисемпе литературисене юратса ӑша хываҫҫӗ. Кашниех хӑйӗнне ҫеҫ мар, тепӗр халӑх йӑли-йӗркине те хисеплени паларать.

Пирӗн шкулта Чӑваш чӗлхи кунне халалласа уяв ирттересси йӑлана кӗнӗ. Чӑваш чӗлхипе литератури учителӗ Галина Анатольевна Васильева Иван Яковлев пурнӑҫӗпе, пархатарлӑ ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарчӗ. Ачасем чӑваш поэчӗсен ҫырнӑ сӑвӑсене илемлӗ вуларӗҫ. Викторина ыйтӑвӗсене хураврӗҫ. Ташӑ-юрӑ ӑстисем те хӑйсен пултарулӑхӗпе савӑнтарчӗҫ.

Эпир тӑван чӗлхе малашлӑхне ӗненетпӗр, чӑвашлӑх ҫутине сӳнме памастпӑр!

*Владимир ВАСИЛЬЕВ.*

Пушкӑрт Республики.

# Маттур ачасем

Аслӑ ҫулхи пур ҫын та ҫак икӗ уява хаваспа кӗтсе илнӗ. Пӗри – Ҫӗнтерӳ кунӗ, тепри – Мӑнкун.

Эпир, ачасем, Ҫӗнтерӳ кунне хисеплесе паллӑ тума тӑрӑшсах хатӗрленеттӗмӗр. Юрӑ, сӑвӑ тата ташӑ вӗренеттӗмӗр. Концерт лартса ҫынсене савӑнтараттӑмӑр.

«Ачасем, кӑҫал лайӑх вӗренекенсене Ҫӗнтерӳ кунӗнче палӑк умне хурала тӑрататпӑр!» – пӗлтерчӗ пӗррехинче Клара Ивановна. Пурте шӑпланчӗҫ, шухӑша путрӗҫ. Хулара, парк ҫумӗнче, вӑрҫӑра ҫапӑҫса паттӑррӑн пуҫ хунисене чыслакан ҫӳллӗ палӑк ларать. Ҫавӑнта каймалла пулать те ӗнтӗ. Ку хыпар пурне те хаваслантарчӗ, кахаллисем те тӑрӑшса вӗренме пуҫларӗ.

Малтанах пире салтаксем пек утма вӗрентрӗҫ. Тата палӑк умне тӑрсан пачах та хускалма юраманнине ӑнлантарчӗҫ. Эпир тӑнларӑмӑр, хамӑра паттӑррӑн туйма пуҫларӑмӑр.

Акӑ уяв кунӗ те ҫитрӗ. Хӗвел пӑхнӑран ҫанталӑкӗ питӗ ӑшӑ. Хӗрачасем шурӑ саппун ҫакнӑ, галстук ҫыхнӑ. Арҫын ачасем шурӑ кӗпе тӑхӑннӑ. Каймалли вӑхӑта пурте хаваспа кӗтрӗмӗр.

Пионерсен ертӳҫи Татьяна Васильевна пире палӑк умне илсе кайрӗ. Унта эпир салтаксем пек таплатса палӑкӑн тӑватӑ енне пӗрер вырнаҫса тӑтӑмӑр. Ман енче – Петя Иванов. Тепӗр енне Миша Сидоровпа Маша Васильева тӑчӗҫ.

Татьяна Васильевна палӑк умне чечек ҫыххи хунӑ хыҫҫӑн: «Эпӗ каятӑп. Сире килсе улӑштарсан эсир те шкула пырӑр», – терӗ.

Питрен хӗвел хӗртет. Сӑмса умӗнчен те час-часах шӑна пеккисем вӗҫсе иртеҫҫӗ. Ак тата ҫамка та кӗҫӗтме пуҫларӗ. «Ҫук-ҫук, пирӗн чӑтмаллах. Хускалма юрамасть. Вӑрҫӑри салтаксем темӗн те тӳснӗ», – тесе лӑплантартӑм хама.

Петька енне пӑхма та хӑрарӑм. Шкулти ашкӑнчӑк кунта питӗ чаплӑ ача пулса тӑнинчен кулас шухӑш та пурччӗ. Ҫынсем пирӗн умран иртсе ҫӳреҫҫӗ, пире мухтаҫҫӗ. Савӑннипе чӗре хытӑрах тапма тытӑнать.

Пирӗн пата виҫӗ арҫын ача ҫывхарнине Петьӑпа иксӗмӗр те асӑрхаман. Ҫитсенех вӗсем пирӗнтен кулма пуҫларӗҫ. «Мӗн юпа пек тӑратӑр? Ҫӑвара шыв сыпрӑр-и? Сирӗн чӗлхе те ҫук пуль», – тесе витлерӗҫ. Эпир нимӗн те чӗнмерӗмӗр. Пӗр ачи Петьӑна тӗксе ячӗ, анчах лешӗ хӑйӗн вырӑннех тӑчӗ.

Ак тамаша! Икӗ ачи лакӑмран пылчӑк ӑсса пире пеме тытӑнчӗҫ. Пирӗн сӑн-пит те, ҫи-пуҫ та хуп-хура пулса тӑчӗ, эпир ҫухалса кайрӑмӑр. Савӑнӑҫлӑ кӑмӑл сасартӑк сӳнсе ларчӗ. Ҫак мыскарана пӗр хӗрарӑм асӑрхарӗ, анчах хута кӗмерӗ, малалла утрӗ.

Пӳрт кӗтессинчен шурӑ кӗпеллӗ ачасем ҫывхарнине курсан пире кӳрентерекенсем парк енне сиккипе тарчӗҫ. Ҫынсенчен вӑтанса эпир те шкула чупсах кайрӑмӑр.

*Галина ПЕТРОВА.*

Шупашкар.



*Володя ЯКОВЛЕВ* (Ҫӗрпӳ районӗ, Чурачӑк шкулӗ) *ӳкерчӗкӗ.*

# Сӑвӑпа чӗрем юрлать

## Тавах сире, ветерансем!

### Пиллерӗҫ пире мирлӗ пурнӑҫ

Никама кирлӗ мар вӑрҫа хутшӑнса
Салтаксен кусӗсем хупӑнаҫҫӗ.
Ҫапӑҫаҫҫӗ Тӑван ҫӗршыва сыхласа,
Никама нихӑҫан парӑнмаҫҫӗ,
Ҫемйине яланах чӗрере упраса
Салтаксем малалла талпӑнаҫҫӗ.
Кашни утӑмрах тӑкӑнать чӗрӗ юн,
Пуҫра явӑнать тӗрлӗ шухӑш…
«Хӑҫан та пулин ҫитетех савӑк кун!
Ҫӗршывӑм, пире эсӗ пулӑш…»
Аркатрӗҫ вӗсем хаяр тӑшмана,
Пиллерӗҫ пире мирлӗ пурнӑҫ.
Таятпӑр пуҫа вӗсене чысласа,
Ӗмӗр асра вӗсем пурнӗҫ.

***Кристина УБАСЬКИНА,***
***10 класс.***

Патӑрьел районӗ,
Аслӑ Чемен шкулӗ.



⊚ *Ксения ВАСЮКОВА* (Хӗрлӗ Чутай районӗ, Хӗрлӗ Чутай шкулӗ) ***ӳкерчӗкӗ.***

### Ан пултӑр вӑрҫӑ

***Мрӗклӗ сӑвӑ/***
Вӑрҫӑ хирӗнче пуҫ хунӑ
Паттӑрсене асӑнса
Ман палӑк ларать сарӑлса.
Ак паян эпир палӑк умӗнче
Тӑратпӑр паттӑрсене чысласа.
Вӗсен пурнӑҫланайман ӗмӗчӗсене
Аса илетпӗр хурланса
Таса тӳпене тинкерсе
Ҫутӑ хӗвел ӑшшинче.
Эпӗ тупа тӑватӑп ват асаттене аса илсе:
«Ан пултӑр вӑрҫӑ нихӑҫан!»
Ҫитмӗл ҫул ҫитет тӑшмана аркатни.
Икӗ пин те вун пиллӗкмӗш ҫулта.
Анчах вӑрҫӑран таврӑнӑ
Ват салтаксем те, тылра юлнӑ
Ват асаннесем те, инкесем те,
Аппасем те, ашшӗсӗр ӳснӗ ачасем те
Ялта тӗлпулаҫҫӗ сайра.

***Ксения СЕРГЕЕВА,***
***6 класс.***

Муркаш районӗ,
Шетмӗпуҫ шкулӗ.

### Суран

Аса илсен вӑрҫӑ ҫинчен
Сӑн улшӑнать мӑн асаннен.
Ӑшӑ куҫҫулӗ кусӗнчен
Тумла-тумла юхать хуллен.

Аса илет вӑл иртнине,
Вӑрҫӑн хаяр ҫулӗсене.
Ун чух хӑй савнӑ мӑшӑрне
Тискер вӑрҫа ӑсатнине…

Вӑрҫӑ тухсан мӑн асанне
Юлать улт ачапа пӗччен.
Фронта вӑл пулӑшас тесе
Ӗҫлет колхоз уй-хирӗнче.

Ҫулталӑк иртсенех тепре
Курать повестка килнине.
Тем пек чӗри ыратнине
Вӑл кӑтартмасть ачисене.

Шур хут ҫине мӗн ҫырнине
Вулать шывланнӑ кусӗпе.
Чӗнеҫҫӗ-мӗн ун ывӑлне
Хӳтӗлеме тӑван ҫӗре.

Вӑл макӑрса куҫҫульпеле
Вӑрҫа ӑсатнӑ ывӑлне.
Ыр-сывӑ таврӑнса килме
Ӑна пил панӑ ҫул ҫине.

Вӑл шаннӑ вӑрҫӑ пӗтессе,
Тӑшман парӑннине сиссе.
Ҫӗнтерӗве кӗте-кӗте
Шуратнӑ ҫӳҫ пӗрчисене.

Кӗтсе илет вӑл мӑшӑрне
Вӑрҫӑ пӗтсен пӗр кунхине.
Анчах та хӑйӗн ывӑлне
Кураяс ҫук вӑл ӗмӗрне.

Ҫулсем иртеҫҫӗ майӗпен,
Анчах та вӑрҫӑ суранне,
Хӑй ывӑлне ҫухатнине,
Манаймӗ ман мӑн асанне.

***Елена СОРОКИНА,***
***7 «к» класс.***

Тӑвай районӗ,
Тӑвай шкулӗ.

### Тав сӑмахӗ

Тӑватӑ ҫул кӗрлерӗ вӑрҫӑ,
Тӑкӑнчӗ куҫҫуль ҫӗре.
Ҫав тери асаплӑ пулчӗ
Ирӗклӗхшӗн кӗрешме.

Халӑх пысӑк нуша тӳсрӗ
Ҫӗнтерӗве ҫывхартса,
Пирӗн кукаҫ-асаттесем
Пуҫне хучӗҫ юн тӑкса.

Ҫӗре ҫити пуҫ таятпӑр
Ҫак паттӑрсем умӗнче.
Ҫӗр-пин хут эпир калатпӑр
Тав сӑмахӗ вӗсене.

– Тек нихҫан ан пултӑр вӑрҫӑ!
– Юн ан юхтӑр ҫӗр ҫинче!
– Пултӑр мир, хӗвел ҫеҫ пултӑр
Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере!

***Никита ВАСИЛЬЕВ,***
***3 класс.***

Канаш районӗ,
Катек шкулӗ.



⊚ *Ангелина ЛАВРЕНТЬЕВА* (Канаш районӗ, Катек шкулӗ) ***ӳкерчӗкӗ.***

### Николай Афанасьева

Аякра-аякра, пысӑк сӑрт тӑрринче,
Вӑрҫӑ ҫулӑмӗпе ҫӗр кисреннӗ чухне
Тӑвай енӗн каччи – Афанасьев пичче –
Ҫӗршыва упраса унта хунӑ пуҫне.

Ҫӳллӗ сӑрт тӑрринче вутлӑ хӗм тухнӑран,
Салтаксен малалла кайма май пулманран
Микула ҫул уҫма талпӑнать малалла,
Вӑрттӑн ҫеҫ вӑл шуса хӑпарать сӑрталла.

Пулемет шатӑртатнӑ ҫӗре
Ывӑтать вӑл вут-хӗм парнине.
Шӑпланать пӗр самант пулемет,
Ак каллех-ҫке пусӑать вӑл пеме.

Йӑванаҫҫӗ туссем майӗпен
Пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫӗр ҫине.
Пӗтӗм чун хӑватне пуҫтарса
Ыткӑнать Микула дзот ҫине…

Пурнӑҫне шеллемесӗр ҫапла
Пуҫне хунӑ ентеш паттӑрла.
Вӑл патвар та хастар пулнине
Манас ҫук, манас ҫук нихӑҫан.

***Ангелина ПЕТРОВА,***
***6 «б» класс.***

Тӑвай районӗ,
Тӑвай шкулӗ.

### Мухтав та чыс!

Мухтав та чыс, ветерансем,
Ҫӗнтерӗве туптакансем!
Пурнӑҫӑра пӗр шеллемесӗр
Вут-ҫулӑм витӗр тухнисем!

Суранӑрсем ас илтереҫҫӗ,
Асаплӑ иртнӗ кунсене.
Анчах эсир пуҫа усмастӑр,
Кӗтетӗр ҫӗнтерӳ кунне.

Кашни ҫулах эсир утатӑр
Мӑнуксемпе палӑк умне.
Куҫҫуль витӗр аса илетӗр
Ютра пуҫ хунӑ ентешсене.

Сире чунтан халь тав тӑватпӑр,
Калатпӑр ӑшӑ сӑмахсем:
«Сире эпир нихҫан манмастпӑр,
Асран кайми ветерансем!»

***Валерия АШМАРИНА,***
***7 класс.***

Елчӗк районӗ,
Кӗҫӗн Таяпа шкулӗ.

### Кукаҫи

Вунсакӑр ҫул тултарнӑ каччӑ



⊚ *Даниил СЕРГЕЕВ* (Ҫӗрпӳ районӗ, Чурачӑк шкулӗ) ***ӳкерчӗкӗ.***

Пулнӑ кукаҫи ун чух,
Салтака вӑл туха кайнӑ
Ҫӗмӗрт ҫеҫке ҫурнӑ чух.

«Кӗтсе илӗп, манмӑп», – тенӗ
КукамИ ӑсатнӑ май.
«Сана ҫеҫ саватӑп», – тенӗ
Ҫамрӑк каччӑ утнӑ май.

Хӗрӗх пӗрмӗш ҫул та ҫитнӗ,
Килнӗ хурлӑхлӑ кунсем.



⊚ *Катя ИШМЕНДЕРОВА* (Хӗрлӗ Чутай районӗ, Хӗрлӗ Чутай шкулӗ) ***ӳкерчӗкӗ.***



⊚ *Иван КИРИЛЛОВ* (Шупашкар районӗ, Ҫӗньял Покровски) ***ӳкерчӗкӗ.***

Нимӗҫсем тапӑнса кӗнӗ,
Таптаннӑ тырӑ хирӗсем.

Салтаксем вӑрҫа халь кӗнӗ
Ҫӗршыва хӳтӗлесе,
Хӗҫ-пӑшал тытса тӗл пенӗ
Тӑшмана таврас тесе.

Кукаҫи ман паттӑр пулнӑ,
Ҫитнӗ Берлина ҫити.
Ҫӗнтерӗве кӗтсе илнӗ –
Орденсем… кӑкӑр тулли.

Ҫич ача пӑхса ӳстерне
Кукаҫипе кукамИ.
Ял ҫинче хисеп вӑл илнӗ,
Мухтанать ачи-пӑчи.

Кукаҫи паян та сывӑ,
Пурӑнать кӑштӑртатса.
Кӑмӑлпа вӑл питӗ ырӑ!
Ӑс парать мана савса.

***Вероника КОШКИНА.***

Елчӗк районӗ,
Кӗҫӗн Таяпа шкулӗ.

### Телейсӗр шӑпа

Кӗрлерӗ вӑрҫӑ таврара,
Тухса халь кайрӗҫ арҫынсем.
Кашни килтех ҫав вӑхӑтра –
Телейсӗр ӳсрӗҫ ачасем.

Пӗр килтенех амӑш ӑсатрӗ
Ик ывӑлне, хӗрне те мӑшӑрне.
Кашни кунах Турра вӑл тархасларӗ
Сывлӑхпала ҫитме килне.

Тыр-пул ӳстерчӗҫ ҫамрӑксем,
Йывӑр лава халь туртрӗҫ аннесем.
Пуҫне те хучӗҫ арҫынсем,
Таврӑнаймарӗҫ аттесем.

Кашни килтех кӗтеҫҫӗ ҫырусем:
Кӗтеҫҫӗ саламсем, ӑш сӑмахсем.
Килеҫҫӗ час-часах яла хура хутсем,
Хуйхӑпала тулаҫҫӗ чӗресем.

Пӗрисем хыпарсӑр, ав, ҫухалнӑ,
Паттӑрла пуҫ хунӑ теприсем…
Йывӑрлӑха та ял-йыш чӑтнӑ,
Пуҫне усман хӗрарӑмсем.

Ылханлӑ вӑрҫӑ телее таптарӗ
Ҫурмалла пайларӗ чӗрене.
Тӑвансене текех пуҫтараймарӗ
Амӑш тулли кӗрекене.

Туй кӗрлемерӗ, йӑх тӑсӑлаймарӗ,
Пӗччен ирттерчӗ амӑш ӗмӗрне,
Анчах кӗтме вӑл пӑрахмарӗ
Чунне чи ҫывӑх ҫынсене.

***Кристина ШЕПИЛОВА,***
***9 класс.***

Елчӗк районӗ,
Кӗҫӗн Таяпа шкулӗ.

ШĂПА

# Березовка – вăрçă çулĕсенче

**«Эпир, вăрçăччен çуралнисем, сакăрвунна кайрăмăр ĕнтĕ. Ачалăхăм та, çамрăклăхăм та тахçанах иртрĕç...**



Асаннен ашшĕ, Алексей Максимович Никифоров /1895-1956/



Асаннен амăшĕ, Марфа Тимофеевна Никифорова /1896-1972/

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă вăхăтра эпĕ пиллĕкреччĕ. Анчах 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ, Гитлер Совет Союзне тапăннă хăрушă кун, яланлăхах асăмра çырăнчĕ.

Манăн тăван ял, Березовка, 1921 çулта пуçланса кайнă. Мăн Этмен, Шĕмшеш тата ытти ял çыннисем çак вырăнта лашисене пăхса çӳренĕ. Унтан Сăр шывĕнчен инçе мар вырнаçнă та ял никĕсленĕ. Малтанах вăл Ут-Тапăрь ятлă пулнă. Кайран вăрçă вăхăтĕнче ятне улăштарнă, Социализм çулĕ тенĕ, 50-мĕш çулсенче вăл Березовка пулса тăнă. Таврара хурăн нумай пулнă, халĕ те çаплах. Тен, çавăнпах каярах ăна çапла илемлĕ ят – Березовка – панă пуль.

Лăпкă пурăннă вăхăтра ăнсăртран вăрçă пуçланчĕ. Пур арçынна та çапăçăва ăсатрĕç. Манăн атте те, Алексей Максимович Никифоров фронта кайрĕ. 1946 çулта çеç кăкăр тулли медальпе таврăнчĕ вăл. Атте нумай хулана ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă, Берлина та çитнĕ.

Ялта ватăсем, хĕрарăмсем тата ачасем çеç юлчĕç. Хĕлле пурте вăрман каснă çĕрте ĕçлетчĕç. Ял тавра вăрман ӳсетчĕ вĕт. Пирĕн пата Муркаш, Ишлей районĕсенчен те хĕрарăмсем килетчĕç, кунтах пурăнатчĕç. Кашни килтех вуншаррăн вырнаçатчĕç. Вутă хатĕрлетчĕç. Вăрманта кашнине пай уйăрса паратчĕç. Эпир те, ачасем, кĕштĕртететтĕмĕр: пăчкăпа йывăç касаттăмăр, тураттисене иртеттĕмĕр, шаршанласа купалаттăмăр, унтан чугун çул çине /пирĕн ялтан тăватă çухрăмраччĕ вăл/ илсе каяттăмăр. Темĕнле йывăр пулсан та çынсем чăтатчĕç.

Çуркунне эпир, ачасем, уçланкăра ыхрути пуçтараттăмăр. Унта çуралман икĕ мина выртатчĕ. Аслисем пире çав уçланкăна çӳреме чарнăччĕ. Кайран минăсене хăрушсăрлатрĕç те эпир унта ĕнесене çитерсе çӳреттĕмĕр. Çуркуннерен пуçласа хура кĕркуннеччен пĕтĕм ял уй-хирте ĕçлетчĕ: çĕр сухалатчĕ, сӳрелетчĕ, çум çумлатчĕ, утă çулатчĕ, тыр-пул пуçтаратчĕ, турттаратчĕ... Астăватăп-ха, аслисем те, ачасем те окоп чаватчĕç. Тата ял çыннисем хӳтлĕх вырăнĕ хатĕрленĕччĕ. Кайран унта хӳтĕленнине астумастăп. Эпир çавăнта выляттăмăр. Çав вырăна кĕмелли те, тухмалли те пурччĕ. Тата хĕç-пăшаллă салтаксене астăватăп, вĕсем хăвăрт-хăвăрт утса пирĕн ял витĕр тухатчĕç. Дезертирсем пулнă ĕнтĕ. Ун пек салтаксене те чылай курма тиврĕ. Вĕсем, ахăртнех, поездпа килетчĕç те таратчĕç, анчах пирĕн ялта кам патĕнче те пулин чарăннине астумастăп. Чухăнсем, ыйткалакансем нумай çӳретчĕç, пĕр-пĕр пӳрт тĕлĕнче чарăнатчĕç те чӳречерен шаккатчĕç, сăхсăхатчĕç те типсе хытнă аллисене тăсатчĕç. Эпĕ чупса тухса вĕсене çăкăр параттăм. Аппа вĕсем патне нихăçан та тухмастчĕ. Пирĕн ялта ун чухне 85 килччĕ. Вăрçă çулĕсенче ялти пур çын та: «Пĕтĕмпех – фронтшăн, пĕтĕмпех – çĕнтерӳшĕн!» – девизпа пурăнатчĕ. Кашни килтех ĕне, сурăх, чăх тытатчĕç. Пирĕн ялтан кам та пулин ыйткалакана тухса кайнине астумастăп. Ытти ялсенчи пек выçса вилекенсем пирки те илтмен. Ялта пурăнакансем фронта, патшалăха çăмарта, сĕт, çу тата аш-какай паратчĕç. Хĕлле алсиш-нуски çыхатчĕç те колхоз çакна йăлтах фронта ярса паратчĕ. Каçсерен ялта пĕр çутă та курăнмастчĕ. Краççын ламписем пурччĕ-ха, анчах çав çулсенче ăна тупма йывăрччĕ. Çавăнпа хăйă хатĕрлетчĕç, каçхине унпа çутă вырăнне усă куратчĕç. Нимĕç самолечĕсем пĕр çутă та ан асăрхаччăр тесе тĕттĕмленсенех чӳречесене хуплама хушатчĕç. Пирĕн ялтан инçе мар çар часĕ пурччĕ, унти салтаксем чугун çула хуралласчĕç.

Вăрçă çулĕсенче лавккара нимĕн те сутмастчĕç. Тумтир тавраш те çукчĕ. Пире сурăх тирĕнчен темĕн çĕлесе тăхăнтаратчĕç. Ун чухне çĕвĕ машини те çукчĕ. Ялта ятарлă çĕвĕçсем хăйсен машинкисемпе çӳретчĕç, вĕсене майдан вырăсĕсем тетчĕç. Вĕсем пире тăхăнма мĕн те пулин çĕлесе паратчĕç. Пирĕнпе пурăнакан Максим мучи çăпата туса паратчĕ.

Ял çывăхĕнче кӳлĕ нумайччĕ. Ачасем çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те унта пулă тытма çӳретчĕç. Эпир те хĕлле пиччепе иксĕмĕр каяттăмăр. Тен, шăпах Сăр шывĕ çăлса хăварчĕ те пулĕ ял çыннисене, вăрçа тӳссе иртterме пулăшрĕ.

1944 çулта эпĕ пĕрремĕш класа кайрăм. Пирĕн ялта тăватă класлă шкул пурччĕ. Вĕрентекенсем – Елена Григорьевна Николаева тата Иван Леонтьевич Михайлов. Тетрадь те, ручка та çукчĕ. Пиччесемпе аппасем тетрачĕсенчи пушă вырăнсемпе усă куратăмăр. Хăш чухне хаçатсем илсе килсе кăранташпа е чернилпа çыраттăмăр.

Березовка ялĕнче пурăнакансем вăрçă çулĕсен пур йывăрлăхне те тӳссе иртterчĕç. Пĕтĕмпех калаймăн та, вăл вăхăтра пурăннисем çеç ăнланĕç...»

Березовкăри вăрçă çулĕсем çинчен манăн асанне, 1936 çулта çуралнă Анна Алексеевна Никифорова /Семенова/, аса илсе каласа пачĕ.

***Анастасия СЕМЕНОВА, 8 класс.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Çĕн Атикасси шкулĕ.

**Çемье архивĕнчи сăнӳкерчĕксем.**



Сылтăмран пĕрремĕшĕ – манăн асанне, Анна Алексеевна Семенова /Никифорова/.

КĔСКЕН

## Унта пурăннишĕн мухтанатăп

Елчĕк илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Унăн çумĕпе Пăла юханшывĕ юхса иртет. Вăл тăватă ял хушшинче ларать.

Унта Çĕнĕ кас, Çамрăксен урамĕ, Октябрь, Пĕрремĕш май тата ытти урам та пур. Виçĕ урам ятне вара Совет Союзĕн Геройĕсене асăнса панă. Вĕсем пирĕн ентешсем – Семен Алексеевич Андреев, Александр Филиппович Беляев тата Николай Петрович Иванов.

Çав урамсенчен пĕринче пурăнатăп та ĕнтĕ эпĕ. Манăн юратнă урам – С.А.Андреев ячĕпе хисепленет. Семен Алексеевич Энтепере çуралса ӳснĕ. 1942 çулта Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Вăл Аслă Аттелĕх вăрçинче Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнче пулнă. Çамрăк сержант тăшмансемпе паттăррăн çапăçса вăрçă хирĕнче пуçне хунă. Чăваш каччи Ленин орденне, медальсене, Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ.

Çак урам иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче йĕркеленнĕ. Вăл сăрт çинче мăнаçлăн курăнса ларать. Андреев урамĕн хăйĕн уйрăмлăхĕ те пур. Кунта икĕ хутлă çуртсем çеç, хулана килнĕ пекех туйăнать. Пирĕн касра «Юман» лавкка, Ырсамай паркĕ, ипподром пур. Унта тăтăшах уявсемпе ăмăртусем иртеççĕ.

Мана паттăр ячĕпе хисепленекен урамра пурăнма тӳр килнишĕн мăнаçланатăп.

## Кукамай – чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ

Манăн кукамай, Людмила Алексеевна Владимирова, Патăрьел районĕнчи Ишлĕри тĕп шкулта 36 çул учитель пулса ĕçлет. Вăл ачасене тăван чĕлхене юратма, тĕрĕс çырма та вулама вĕрентет.

Кукамай Патăрьел районĕнчех çуралса ӳснĕ. Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн шкулта ачасене пĕлӳ пама пуçланă. Хăйĕн ĕçне юратса пурнăçлать вăл, пире те тăван чĕлхен илемлĕхне туйма вĕрентет. Ачасем те юратаççĕ ăна, канаш ыйтма, калаçма пыраççĕ. Алла аттестат илсе тухса кайнисем тăтăшах ăшă саламсем яраççĕ.

Ачасене тĕрĕс воспитани пама пултарнишĕн, ĕçне пĕлсе тунишĕн ăна нумай Хисеп хучĕпе наградăланă. Вăл Раççей вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ.

Кукамайпа кукаçи виçĕ хĕр çитĕнтернĕ. Виççĕшне те икшер аслă пĕлӳ илме пулăшнă. Халĕ мăнукĕсемпе савăнса пурăнаççĕ.

***Дима КАЗЕЕВ.***

Елчĕк районĕ,
Елчĕк шкулĕ.

# Кадетсен командирĕ Таня



Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш шкулĕн çиччĕмĕш кадет класĕн командирĕ Таня Иванова хăй ырăнне ниепле те тупаймасть.

– Кадет ретне тăни нумаях пулмасть-ха, çапах чунра хавхалану çăлкуçĕ тапса тăрать. Ахальтен мар. Нумаях пулмасть Калинино шкулĕн кадечĕсемпе Мускава çитсе килтĕм. Пур ушкăна та кая хăварса пĕрремĕш вырăна тухнине хам куçпа хам курса тĕлĕнтĕм. Вĕсем пирки жюрире ларакан çар çыннисем мĕн тери ырă сăмахсем каларĕç! Чăн та, кадетсем стройпа илемлĕ утаççĕ, ăслă та анлă тавракурăмлă, бал ташши хитре ташлаççĕ... Командирĕ тата, командирĕ усă саслă та вăр-вар хĕрача. Катя Судова! Пысăк конкурсра «Чи лайăх командир» ята та вăлах тивĕçрĕ. Хастарсенчен пирĕн вĕренмелли питĕ нумай. Çитĕнӳ еннелле туртăнас тесен, ай, кану мĕн иккенне мансах тăрăшмалла. Пĕрремĕш хут кадет тумне тăхăннă кун асрах-ха. Февраль уйăхĕччĕ ун чухне. Тулта сивĕ пулсан та, чунра çав тери ырăччĕ, – терĕ Таня.

Вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыракан хĕрача кукамăшĕпе пурăнать. Ашшĕпе амăшĕ Мускава ĕçлеме çӳреççĕ, икĕ аппăшĕн ĕнтĕ хăйсен çемйи. Çавăнпа килти ĕçсем ытларах Таня çине тиенеççĕ. Апат пĕçерме юратать вăл, урай, кашăк-чашăк çума та ӳркенсе-юлхавланса тăмасть.

– Чи пысăк уяв маншăн – аякри хуларан аттепе анне киле таврăнни. Сĕтел те тутлă çимĕçсемпе тулать. Шăкăл-шăкăл калаçса ларатпăр вара чылайччен. Ах, аттепе-аннешĕн мĕн тери тунсăхлатăп. Ялта ĕç çук пирки аякка тухса кайма лекет-çке вĕсен. Укçи-тенки вара кашни утăмра кирлĕ. Акă пахча ĕçĕсем пуçланчĕç. Çĕр сухалама çеç мар, курăк акма та, сухан, кăшман, хăяр вăррисем илме те укçа кирлĕ, – тет ял пурнăçне ăнланакан хĕрача.

Паян вара кадет класĕнче вĕренме тӳр килнишĕн чунтан савăнать.

– Кадет класĕнче ăс пухман-тăк, Калинино çамрăкĕсемпе Мускава çитсе тĕрлĕ вырăнсенче те пулаймастăм. Питĕ килĕшрĕ мана хула. Аннепе те тĕл пулма тӳр килчĕ. Унран уйрăлас килмерĕ ун чухне. Кайран çывăрма выртсан тунсăх пуснипе куçăм куççульпе тулчĕ. Куç умне кукамай сăнарĕ шуса тухрĕ, унтан аннепе атте, аппасем... Тăван тăрăхшăн та тунсăхланине чĕрепе туйса илтĕм. Киле çитсен калинккене чун хавалĕпе уçса кĕтĕм! «Кукамай, Мускавра аван, анчах тăван тăрăхра тата лайăххах. Тинех, тинех килте иккен эпĕ!» – тесе ăна ачашшăн ыталаса илтĕм. Мана ырă-ырă пулса кайрĕ. Çӳлти пĕлĕтре вĕçнĕнех туйрăм хама, – тет Таня.

Хĕрача ӳссен пысăк çын пуласшăн. Унччен вара кирек ăçта та çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса шкул ятне çӳлте тытасшăн.

# Çар çынни пулас тĕллевлĕ Эдик

Эдик Константинов саккăрмĕш кадет класĕнче пур предметпа та «5» паллăпа çеç вĕренсе пырать.

– Пĕрремĕш класранпах вĕренĕве малти вырăна хуратăп. Çĕннине нумай пĕлес килнĕренех вулама юрататтăм. Халĕ те çавах. Алла кĕнеке лексен ăна вуласа тухмасăр та, тишкермесĕр те чун канмасть. Шкултан вĕренсе тухсан çар çынни пулас килет. Ахальтен мар паллах. Пирĕн шкула час-час çар çыннисем çитеççĕ, паттăрлăх урокĕсем ирттереççĕ. Ырă та таса чунлă, çĕршыва юрăхлă çынсем пулма пил параççĕ. Офицерсем шкула килсе çӳрени мана çав тери çунатлантарать. Ăса вĕрентсе каланă кашни сăмахне асра тытатăп. Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыратăп, спортра хастар, общеществăлла ĕçсенчен те пăрăнса юлмастăп. Аслисене хисеплетĕп, вĕсем мĕн каланине пурнăçлама тăрăшатăп. Кĕçĕннисене вара кӳрентерместĕп, – терĕ хастар яш.



Нумай пулмасть вĕсен ушкăнĕ Мускава кадетсен ăмăртăвне кайрĕ. Унта та Вăрнар тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, паян тĕрлĕ хуласенче пурăнакан çар çыннисем хавхалантарма пыни те вĕсене мĕн тери çунатлантарчĕ! Çитменнине йывăр ăмăртусене çĕнтерсе пĕрремĕш вырăна тухрĕç.

– Шăп çавăн чухне Михаил Петрович Григорьев генерал-майор хăйĕн çар тумне Калинино шкулĕн музейне парнелессине пĕлтерчĕ. Пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ çар çи-пуçне мана тыттарчĕ. Çакă мана питĕ пăлхантарчĕ, çав вăхăтрах хавхалантарчĕ. «Эпĕ те сирĕн пекех çар çынни пулса Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратса хисеплĕп», – пĕлтертĕм çийĕнчех хам шухăшăма, – терĕ хастар кадет Эдик Константинов.

Кадетсем халĕ çине тăрса Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине паллă тума хатĕрленеççĕ.

– Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче палăк умне тухса чĕрĕ чечек хурăпăр. Фронта хĕрарăмсем мăшăрĕсемпе ывăлĕсене, хĕрĕсемпе кинĕсене куççуль витĕр ăсатнă... Чип-чипер пурăнас çынсене мĕн чухлĕ пĕтернĕ ирсĕр тăшман. Мĕн чухлĕ хурлăх кӳнĕ. Пин-пин çынна ĕмĕрлĕх чăлах та телейсĕр туса хăварнă. Тăшмана пусĕлех çĕнтериччен, ăна çапса аркатиччен мĕн чухлĕ куççуль кăларман-ши! Е тата вăрçă чарăннă вăхăтах илер-ха. Пуйăсран анакансен хушшинче хăйсен тăванĕсене, ашшĕсене, мăшăрĕсемпе ывăлĕсене шыранă... Теприсем вара вĕсен хушшинче сывăх çыннисене, чун тĕпренчĕкĕсене курайман... Вĕсен юратнă çыннисене тăшман пульли тĕп тунăран чуна ыраттармалла кăшкăрса макăрнă.

– Ăçта-ши эсир, чунăмăрсем?! Мĕншĕн çук эсир, мĕншĕн килместĕр?!

Эпир вара, паянхи ăру, вăрçăра пуç хунă салтаксен ячĕсене ĕмĕр асра тытăпăр, – терĕ Эдик.

# «Асанне сарă хĕвел пекех»

Çĕрпӳ районĕнчи Тавăшкасси шкулĕн 2-мĕш класĕнче вĕренекен Даниил Ионовшăн пурнăçра чи хакли – асламăшĕпе ашшĕ. Вăл вĕсене тӳпери çутă çăлтăрсемпе танлаштарать. Вĕрентекен февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне кашни ачана «Юратнă атте» ятлă сочинени çырса килме хушсан, арçын ача пĕтĕм чун хавалĕпе сĕтел хушшине тирпейлĕн вырнаçрĕ. «Çак вăхăтра мана валли çĕрулми ăшалакан атте – чи лайăххи, чи маттурри! Эпĕ ăна чунтан юрататăп, унăн кашни сăмахне ăша хывса пурнăçлама тăрăшатăп...» Çаплах чи ăшă сăмахсене шурă хут çине шăрçаларĕ те шăрçаларĕ арçын ача... Пĕрре юратнă ашшĕ, тепре хăй çырнă йĕркесем çине хавассăн пăхрĕ вăл...

Пуш уйăхĕн 8-мĕш тĕлне класс ертӳçи Надежда Евлогиевна Антонова каллех вĕренекенсене сочинени çырма сĕнчĕ.

– Ачасем, иртнĕ уйăхра юратнă аттесем пирки пĕчĕк заметкăсем шăрçаларăмăр-ха. Кашнин хăйне евĕр илемлĕ пулса тухрĕ вăл. Умра – каллех пысăк уяв. Аннесене саламламалли вăхăт çитет, çавăнпа та анне çинчен мĕн шухăшланине çырар-ха паян урокра, – терĕ.

Пурин куçĕсем те çуталчĕç, тутисем йăл кулчĕç. Хавассăн ĕçе пуçăнчĕç. Даниил вара тарăн шухăша путрĕ. «Анне... Ăна пачах та астумастăп-çке...», – тесе алла ручка тытрĕ. «Асанне – маншăн чи юратнă çын! Вăл мана мĕн пĕчĕкрен лăпкаса, ачашласа ӳстернĕ. Утма пуçласан та пĕчĕк аллăмсене сарса ăна хирĕç чупнă та унăн ытамне чăмнă. Асаннеçĕм, эпĕ сана чун-чĕререн юрататăп. Сана савăнтарас тесе шкулта лайăх вĕренме тăрăшатăп. Дневникри «4» тата «5» паллăсене курсан мĕн тери савăнатăн. «Тăрăшса вĕрен, ачам, ӳссен пысăк çын пул», – тесе пуçран ачашлатăн. Аттепе иксĕмĕршĕн эсĕ – Пирĕшти. Сана çăмăллăх пултăр тесе аттепе картиш тулли выльăх-чĕрлĕх пăхатпăр. Эпĕ ĕнтĕ ĕне те сума вĕрентĕм. Ĕçлемесĕр, вăй хумасăр куркана пĕр тумлам та сĕт килмесси питĕ лайăх пĕлетĕп. Умра – çуллахи кунсем. Выльăх валли утă-улăм хатĕрлемелли кунсем çитсе пыраççĕ. Кăçал та алă усса ларасшăн мар эпĕ, аслисемпе уйра тăрăшасшăн. Асаннеçĕм, сана малашне те ырлăх-сывлăх сунатăп. Эсĕ пирĕншĕн ирхине кантăкран кĕрекен сарă хĕвел пекех... Эсĕ – кил ăшши!» – тесе вĕçлерĕ ун чухне хăй ĕçне Даниил Ионов.



Паян та, ыран та, тепĕр кун та асламăшĕ пирки çакăн евĕр хайлавсем çырма хатĕр Даниил.

– Мĕншĕн тесессĕн, асанне çак çĕр çинче пĕртен-пĕрре! – тет вăл.

Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.

**Хаклă ашшĕ-амăшĕ! Сирĕн ачăрсем "Тетте" журналсăр питĕ тунсăхлаççĕ. Ăна çырăнса пама ан манăр!**




Элиза ВАЛАНС

# Паттăрсем манăçмаççĕ

Канмалли кун аппапа пӳрт-çурта тасатма шухăшларăмăр. Тусан шăлтăмăр, урай сĕрсе тухрăмăр. Шкапри кирлĕ мар хутсене пăрахас тесе пĕр çĕре пуçтарма тытăнтăмăр. Шăп çак вăхăтра картишрен асатте кĕчĕ те пирĕн еннелле утăмларĕ. Пĕр сăмах чĕнмесĕр хут тĕркемĕ хушшинче тем шырама тытăнчĕ.

– Акă вăл, тупрăм тинех? Çак конверт темиçе çул каяллах йĕп пек çухалнăччĕ. Питĕ кулянтăм. Маншăн çав тери хаклăскер вăл, – ăнлантарчĕ диван çине ларнă май.

– Çак сарăхса та кивелсе кайнă конвертпа кам патне те пулин çыру ярасшăн-им? Асатте, халь никам та çыру çырмасть. Кампа та пулин калаçас килсен, телефон пур. Курас килсен – скайппа усă кур. Халĕ çĕнĕ ĕмĕр çĕнĕлле чупать, – ăнлантартăм ăна ыталаса.

– Эсĕ, мăнукăм, тĕрĕсех асăрхаттаратăн-ха. Анчах сăмахăм çыру ярса-илесси пирки мар. Çак конверт ăшĕнче – хам ӳкернĕ ӳкерчĕк. Паттăр ача пурччĕ пирĕн отрядра. Иккĕре чухне амăшĕ вилнĕ унăн, пиллĕк тултарсан вара ашшĕнчен те ĕмĕрлĕхех уйрăлнă. Пурнăçĕ йывăрлăхра иртнĕ. Тепĕр чухне хамăр çиес апата та ăна параттăмăр. Начарккаскер кăштахран патварланчĕ. Ирсĕр тăшмана чунтан кураймастчĕ, мĕн вăй çитнĕ таран тĕп тума тăрăшатчĕ. Шӳтлеме тата мĕн тери юрататчĕ! Ĕмĕчĕсем вара пысăкчĕ. Тăван тăрăха çĕнтерӳпе таврăнсан çурт лартса çемье çавăрас тĕллевлĕччĕ. Пĕр кунхине фашист пирĕн çине тапăнса кĕчĕ. Ванюк вара вĕсен темиçе танкне пĕр харăс сирпĕтрĕ… Шел, хăй те пĕрле… Нимĕçсем хăраса каялла тарчĕç. Çапла Ванюка куç умĕнчех çухатрăмăр. Çав ачана час-часах тĕлĕкре кураттăм. Никампа та калаçмасть. Шап-шурă тум тăхăннăскер пирĕн еннелле тĕмсĕлсе пăхать те самантрах куçран çухалать. Вăрçăччен ӳкерме юрататтăм та, самантрах алла кăранташ тытрăм. Паттăр сăнарне хут çине куçартăм та кăкăр çумĕнчи кĕсьене чикрĕм… Халь авă шăп та лăп çакăнта упранать те унăн сăнарĕ, – тесе асатте сарăхса кайнă конвертран ӳкерчĕк кăларчĕ.



Харсăр çамрăк вăхăтсăр вилнишĕн чун хурланчĕ.

– Кăçал Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи чарăннăранпа 70 çул çитет. Майăн 9-мĕшĕнче алла чĕрĕ чечек тытса пурте палăк умне кайăпăр. Пирĕнтен уйрăлса кайнă салтаксене ĕмĕр манмалла мар, – терĕ асатте.

***Семен ПАНЕВИН** (Çĕрпӳ районĕ, Тавăшкасси) ӳкерчĕкĕ.*

**● ВĂЙĂ-КУЛĂ УÇЛАНКИ**

**Мулкача канфет патне çитме пулăш.**




**Вазăн çĕмĕрĕлчĕкне туп.**



**Севиль МУСАЕВА** ӳкерчĕкĕсем.

*Пирĕн пултарулăх*

## Ан пултăр вăрçă нихăçан!

Ан пултăр вăрçă нихăçан!
Пурнасчĕ тăнăçлă ялан.
Пуласчĕ туслă пуринпе,
Вăрçă ан пултăр тĕнчере!

***Игорь ОВЧИННИКОВ,***
***7 çулта.***



***Лиза МОЛОДОВА** (Елчĕк районĕ, Елчĕк шкулĕ) ӳкерчĕкĕ.*

ИККĔШĔ ТЕ ПĔР ШУХĂШЛĂ

# Инкек парнеленĕ тĕлпулу



**Çук, çакăн пек хăрушă инкек пулса тухасса Света шухăшлама та пултарайман. Çав кун хĕр чĕри теме сиссе хыттăн-хыттăн тапрĕ. Кунĕ те, май уйăхĕ пулсан та, хĕвелсĕрччĕ. Пăлханăвне, шикленĕве сирсе Света ялти тантăшĕн туйне каймах шут тытрĕ. Çула тухрĕ.**

Света – чипер хĕр. Сăнĕпе пĕр-пĕр юмахри пикене аса илтерет. Пилĕк таран хура кăтра çÿçĕ, икĕ хура шăрça пек куçĕ... Те килĕшÿллĕ тумтир тăхăнма пĕлнĕрен кĕлетки те ытармалла мар илемлĕ курăнать.

Чăннипе каласан, Светăпа нумай каччă калаçасшăнччĕ-ха. Анчах та хĕршĕн вĕсем – юлташ çеç. Пĕр Славăна кăна саватчĕ вăл. Каччă вара Светăн тантăшне, Иннăна кăмăлларĕ, унпа çемье çавăрасшăн. Çук, Света тусне усал сунмасть, ăмсанмасть те. Вăл Инна хăйĕн телейне тупнишĕн хĕпĕртет. Çĕнĕ мăшăра саламласа парнелеме Света хрусталь черккесем те илсе хунă ĕнтĕ.

Вокзалта çын питĕ нумай. Хĕр билет илме черет тăчĕ. Шухăша путнăскер черет хăйĕн тĕлне çитнине те сисмерĕ, кассиршăн сасси шухăш серепинчен кăларчĕ. Света пусăрăнчăк кăмăлпах автобуса кĕрсе ларчĕ.

Автобус тикĕс çулпа шав малалла чупать. Тепĕр çур сехетрен Света тăван ялне çитет. Ку шухăш кăшт хавхалантарчĕ ăна.

Кĕтмен çĕртен хирĕç çулпа КамАЗ вирхĕнсе килни курăнчĕ. Автобус водителĕ темиçе хут сасă пачĕ пулсан та лешĕ пăрăнмарĕ. Автобус тăруках сылтăмалла пăрăнчĕ, хирĕç килекен машина та çавăнталлах çул тытрĕ. Пассажирсен çухăрнă сассисем илтĕнчĕç...

Йывăр суранланнă пассажирсене сывăхри больницăна ăсатрĕç. Вĕсен хушшинче Света та. Хăйĕнпе мĕн пулса иртнине те, васкавлă пулăшу машини килнине те туймарĕ тăнне çухатнă, суранланнă хĕр.

Пĕр эрнерен Света тăна кĕрсе вăйсăррăн йынăшса ячĕ. Хускалма çук, пуç, пĕтĕм шăм-шак ыратать. Куçне уçсан шурă стенасемпе шурă мачча тата юнашар кравачĕсем çинчи çынсене асăрхарĕ. Хăй больницăна лекнине ăнланса илчĕ çамрăк пике.

Аварие лекнĕ хĕр тăна кĕнине пĕлсен врач палатăна васкаса пырса кĕчĕ. «Шыв», – вăйсăр сасăпа ыйтрĕ хĕр. Тухтăр куркана хĕр тути патне илсе пычĕ. Вăл ăна суранĕсем çинчен каласа парсан хĕр-упраç чăтаймасăр йĕрсе ячĕ. Епле тÿссе ирттернĕ вăл çак асапа? Унăн аллипе ури хуçăлнă, аяк пĕрчи аманнă, пуç мимийĕ те чĕтреннĕ вĕт-ха.

– Ытлашшипех ан кулян-ха, Света. Санăн пурнăç малалла. Çакăн чухлĕ инкеке çĕнтерме вăй çитертĕн. Больницăран тухсан малтанхи пекех хавасла пулăн, – лăплантарма тăрăшрĕ хĕре Виталий Николаевич.

## Туслăхран кусна юрату

Çамрăк тухтăр çак больницăра ĕçлеме пуçлани те нумаях мар-ха, çавăнпа ăна кунта пурте пĕлсех те каймаççĕ. Хĕр тăна кĕриччен вăл тăтăшах унта пулчĕ. Тÿрĕ кăмăллă тухтăр хĕр-упраç сывлăхĕшĕн чунтан тăрăшрĕ, операци тума та хăех килĕшрĕ.

Лăплантаракан эмел ĕçсен хĕр каллех çывăрса кайрĕ. Вăрансан хăй умĕнче вăл каллех тухтăра курчĕ.

Светăн амăшĕ хĕрĕ аварие лекнине пĕлсенех больницăна вĕçтерсе çитрĕ. Çапла çав, вĕсем, аннесем. Амăшĕ те хĕрĕ çÿмĕнчен пĕр самантлăха уйрăлмарĕ, кашни кун Турăран тĕпренчĕкĕ часрах ура çине тăтăр тесе йăлăнса ыйтрĕ.

Амăшне палатăра курсан хĕр-упраç питĕ савăнчĕ. Яланах ăшшăн калаçаканскер хальхинче те Светăна çепĕç сăмахсемпе лăплантарчĕ. Уйрăлма вăхăт çитсен иккĕшĕн те куçĕсем шывланчĕç, анчах амăшĕ хĕрĕ умĕнче йĕмерĕ. Тĕпренчĕкне пушшех те кулянтарас темерĕ вăл. Часрах сывалма ыйтрĕ, пĕтĕмпех лайăх пулассине шантарчĕ.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Пĕр уйăх ытла ĕнтĕ Светăна больницăна хуни. Тус-юлташĕсем кашни кун тенĕ пекех çÿрерĕç ун патне.

Юлашки вăхăтра хĕр хăйне сиплекен Виталий Николаевич палатăна килессе кашнинчех чăтăмсăррăн кĕтме пуçларĕ. Тухтăр та хĕрпе тĕлпулу шырарĕ, пушă вăхăт тупăнсанах ун патне васкарĕ. Хăйсем сисмесĕрех пĕр пĕрин патне туртăнчĕç вĕсем. Пĕр канмалли кун çамрăк тухтăр хĕр патне хĕрлĕ кĕлчечек çыххипе килчĕ. Çав кун вĕсен сăмах çăмхи сÿтĕлчĕ те сÿтĕлчĕ, вăхăт иртнине те сисмерĕç.

...Света паян ирех савăнăçлă. Паян ăна больницăран кăлараççĕ. Тинех тăван киле таврăнĕ. Йăл-йăл кулăпа çиçекен сăнĕ пĕр вăхăта салхуланчĕ, Виталирен уйрăлас килмерĕ пикен. Çамрăксем пĕр пĕрне çыхăну тытма сăмах пачĕç, телефон номерĕсемпе ылмашăнчĕç.

Хĕрпе каччă тăтăшах телефонпа калаçрĕç, смс çырăвĕсем çырчĕç. Вĕсен туслăхĕ кунсерен вăй илсе пычĕ. Пĕррехинче вара Виталик Светăна мăшăр пулма ыйтрĕ. Пике именчĕ пулсан та пĕрлешме хирĕç маррине пĕлтерчĕ. Часах икĕ çамрăк пĕрлешнĕ ятпа чаплă туй кĕрлерĕ. Хăнасем ышлăн пухăнчĕç, кашниех илемлĕ мăшăра ăшшăн саламларĕ. Ашшĕ-амăшĕ те ачисене кăмăлтан пиллерĕ.

*Кристина БАХОМОВА.*

Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа шкулĕ.

ЧУНРИ

### Ахаль çын куççулĕ

Ахаль çын куççулĕ
Çĕр çине ÿкмест.
Юрату суранĕ
Нихăçан иртмест.

Турат çинчи кайăк
Пачах юрламасть,
Çÿлти аслати те
Ахаль авăтмасть.

Çеçкене лармасть-çке
Пахчари сирень,
Çÿлти сарă хĕвел
Пăхмасть кунсерен.

Хитре сасă-кулă
Илтĕнмест каçпа,
Çамрăк яш-хĕрсем те
Талпăнмаç вăйя.

Аякри çăлтăр та
Пытаннă паян,
Ир-ирех автан та
Темшĕн авăтман.

Тĕксĕм пĕлĕтсем çеç
Халĕ тÿпере,
Тÿпере çеç мар-çке –
Манăн чĕрере.

Тен, мана анчах вăл
Çапла туйăнать?
Çут тĕнче ытла та
Тĕксĕм курăнать...



### Çуралсассăн туйăмсем...

Юрату вăл пур иккен,
Эп пĕлмен ăна хальччен.
Халиччен чунпа туйман,
Илтнĕ, анчах ăнланман.

Юрату вăл пур иккен –
Шутлаттарать кунсерен.
Юратура вăй-хăват,
Вăл çынна хушать çунат.

Юрату вăл пур иккен –
Пĕлтерет вăхăт çитсен.
Килессе вăл систермест,
Алăк шаккаса кĕмест.

Юратусăр канăç çук,
Пурнăç пулмĕ пыл та çу.
Çуралсассăн туйăмсем
Пулĕç çĕнĕ ĕмĕтсем.

Анчах эсĕ асăрхан,
Пурнăçу сан ăраскал:
Çунатланнă вăхăтра
Пултарать çапса хуçма.

*Ангелина МИХАЙЛОВА.*

Комсомольски районĕ,
Шăхаль ялĕ.

ЮПТАРУ

# Юрату тата Телей

– Ăçта çухалать-ши юрату? – ыйтрĕ ашшĕнчен пĕчĕк Телей.

– Вăл вилет, – хуравларĕ арçын. – Ывăлăм, çынсем мĕн пуррине упрамаççĕ. Юратма та пĕлмеççĕ, ăна хакламаççĕ.

Пĕчĕк телей шухăша путрĕ: «Ÿссе çитĕнĕп те акă, çынсене пулăшăп!»

Çулсем иртрĕç. Телей ÿссе пысăкланчĕ. Вăл хăйне хай панă сăмаха яланах асра тытрĕ: пур вăйран та çынсене пулăшма тăрăшрĕ. Анчах лешсем ăна илтмерĕç. Телей майĕпен пĕчĕкленчĕ, вăйсăрланчĕ. Хăй пачах та çухаласран питĕ шикленнĕрен инçе çула тухма шут тытрĕ. Тен, унта вăл хăйне сыватакан эмел тупĕ?

Нумай-и, сахал-и утрĕ вăл, çул çинче никама та тĕл пулмарĕ. Унăн вăйĕ чаксах пычĕ. Вăл чарăнса инçех мар ÿсекен лаштра йывăç сулхăнне канма выртрĕ. Тĕлĕрсе кайма пуçланăччĕ çеç, ура сассине илтрĕ.

Куçне уçрĕ те аллине туя тытнă ватă карчăка асăрхарĕ. Тумтирĕ çĕтĕк, хăй çарран. Телей сиксе тăчĕ:

– Ларăр, тархасшăн. Эсир ывăннă пуль. Канса вăй илмелех.

Ватă, ĕшеннипе ури çинче аран тăраканскер, тÿрех курăк çине вырнаçрĕ. Кăшт сывлăш çавăрса илсессĕн вăл Телее хăй çинчен каласа пачĕ:

– Мана ыттисем ватă пек йышăнни кулянтарать, тĕрĕссипе, эпĕ çамрăк-çке. Ятăм вара – Юрату!

– Пулма пултараймасть! – тĕлĕнчĕ Телей. – Мана Юрату тĕнчере чи илемли те асамли тесе каланăччĕ!

Ватă ун çине тимлĕн пăхрĕ:

– Санăн яту мĕнле?

– Телей.

– Ав епле? Мана та Телей илемлĕ пулмалла тесе пĕлтернĕччĕ, – терĕ те карчăк кĕсйинчен куçкĕски кăларчĕ.

Телей хăйне курчĕ те йĕрсе ячĕ. Юрату ун çумне ларса ăна çупăрларĕ.

– Мĕн туса хучĕç пирĕнпе усал çынсемпе шăпа? – ĕсĕклерĕ Телей.

– Нимĕн те, – калаçрĕ Юрату. – Эпир яланах пĕрле пулса пĕр-пĕрне хÿтĕлесен, пулăшсан тепĕр хут вăй илсе чечекленĕпĕр.

Çав лаштра йывăç айĕнче Юратупа Телей тек нихăçан уйрăлмăпăр тесе тупа турĕç. Çавăнтанпа этем пурнăçĕнчен Юрату кайсан Телей те çухалать. Вĕсем уйăрммăн пулмаççĕ. Çынсем вара çакна халĕ те ăнланаймаççĕ.

# «Ĕмĕре ачасемпе ирттертĕм...»



**Василий Егорович Яковлев /Василий Велвокай/** 1915 çулхи майăн 3-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхаль ялĕнчи вăтам хресчен çемйинче çуралнă Василий Велвокай ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ. Пĕр çулталăк Первомайскинче пĕлӳ илнĕ хыççăн каллех тăван тăрăха таврăннă. Патăрьелĕнчи педагогика училищин дипломĕпе çамрăк кунтах вĕрентекен пулса ĕçленĕ. 1939 çулхи ноябрьте Совет çарне кайнă. 1941-1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Паттăрлăхшăн тĕрлĕ медальпе, орденпа наградăланă.

Вăрçăран таврăнсан Нăрваш Шăхалĕнчи шкулта кĕçĕн классен учителĕнче ĕçлеме пуçланă. Каярах ачасене шкулта ӳкерӳ ăсталăхĕн вăрттăнлăхĕсене хăнăхтарнă.

Вăл Эмине, Алексей Талвир ячĕллĕ литература премийĕсене, Чăваш халăх ăсчахĕ хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

«Вутра çуралнă юрату», «Песня моей души» кĕнекесен авторĕ. Çак кунсенче унăн 100 çулхи юбилейне анлăн паллă турĕç.

## Ачасем валли çырнисем

### Пӳрнеске

(*Юмах*)

Ĕлĕк-авал пĕр ялта  
Анаткасра, аялта  
Пурăннă, тет, карчăкпа  
Пĕр старик ача-пчапа.  
Кунне-çĕрне ирттернĕ –  
Çичĕ ывăл ӳстернĕ.  
Пĕри пĕчĕк тепринчен.  
Кĕçĕнни пачах ӳсмен –  
Кăшт пысăкрах пӳрнерен.  
Пĕвĕ ытла пĕчĕкрен –  
Пурте ăна витлесе  
Чĕннĕ: «Пӳрнеске», – тесе.  
Япăх пурăннă авал,  
Курнă ыррине сахал.  
Халăх сухапуç тытса  
Хăшкăлнă хĕн çеç тупса.  
Тертленсе çын выçăпа  
Хĕл касăйнă темелле.  
Анчах сарăмсăр шăпа  
Кĕнĕ чухăн тĕпеле.  
Ăшă, тутлă ыйхăпа  
Çывăраççĕ ачасем.  
Питĕ тарăн хуйхăпа  
Шухăшлаççĕ амăшсем:  
– Мĕн-ши çийĕпĕр ыран?  
Вилĕç ачасем выçăх...  
Татăлтăмăр тырăран,  
Апат пĕтрĕ-çке йăлтах.  
Мĕн тăвар-ха ? Малалла  
Еплерех пурăнмалла?  
Вăрмана ирĕксĕрех  
Леçмелле ачасене...  
Йывăр пулмĕччĕ сĕре,  
Шел çап-çамрăк чунсене.  
Ырă çын, тен, тĕл пулать,  
Мĕскĕнсемшĕн тур пулать,  
Пӳрнеске çак канаша  
Илтрĕ алăк хыçĕнчен.  
Пухрĕ те вăл шухăша,  
Çывăрмарĕ мĕн ирччен.  
Пурлă-çуклă çăнăхран  
Амăш çăкăр пĕçерет.  
Пӳрнеске, ак, çырмаран  
Шур чул пуçтарса килет.  
Амăш чĕри ыратать,  
Ачисемшĕн кулянать.  
Анчах ним те тума çук  
Çемье выçă ларнă чух:  
Татăк-татăк çăкăрне  
Пачĕ те вăл валеçсе,  
Куçран çухаличченех  
Пăхса тăчĕ çул çине.  
Ашшĕ ывăлĕсене:  
«Вутта кайăпăр», – тесе  
Ертсе кайрĕ хистесе  
Инçетри вăрман енне.  
Пӳрнеске утать пĕччен  
Тетĕшĕсем хыçĕнчен.  
Пырсан-пырсан пĕр чулне  
Пăрахать вăл çул çине.  
Çулĕ вăрăм каймалли,  
Пĕтрĕ чулĕ тăкмалли...



Хуçа-хуçа çăкăрне  
Пăрахать вăл çул çине.  
Вăрман чăтлăхне çитсен,  
Çапă хуçма пикенсен,  
Ашшĕ вăрттăн пăрăнать.  
Килнелле вăл çул тытать.  
Ачисем, çакна сиссен,  
Макăраççĕ темĕнччен.  
Шăллĕ çеç лăплантарать,  
Килелле утма калать.  
Паллă тунă сукмакпа  
Чупрĕç, акă, ушкăнпа.  
Анчах мĕн ку? Каласам,  
Сукмак кайрĕ татăлса.  
Çуккă çăкăр таткисем.  
Çисе кайнă кайăксем.  
Тухрĕç хура пĕлĕтсем,  
Пач! çухалчĕç суттисем.  
Ыр çанталăк пăсăлать,  
Çумăр çума тытăнать.  
Çулсăр чупрĕç аташса  
Ачасем паш-паш туса.  
Кашкăр ларчĕ уласа,  
Тăмани те – ухлатса...  
Касĕ хăвăрт çывхарать –  
Чун шикленет, куç хăрать.  
Пӳрнеске теме сăнать –  
Йывăç çине улăхать.  
Сутă курчĕ аякра,  
Уншăн савăнать ача.  
Чупрĕç ушкăнпа вара.  
Хăрамарĕç те пачах.  
Усланкăра çырт ларать,  
Чӳречи усах тăрать.  
Шăнса кайнăскерсене  
Кам кĕртет-ши, хĕрхенет?  
Карчăк кантăкран пăхать:  
– Мĕн кирлĕ?– тесе ыйтать.  
Хуйхине калаç ăна:  
«Ху пӳртне кĕртсем кăна...»  
«Çук, – тет карчăк, – юрамасть.  
Кунта Аçтаха пурнать.  
Вăл çынсене юратмасть,  
Çисе ярĕ пурсăра...»  
«Пире вăрманта пĕрех  
Кашкăрсем тытса çиме  
Пултараççĕ кĕçĕрех.  
Ним те мар унта вилме.» –  
Тархасларĕ Пӳрнеске,  
Карчăкран, кĕртме шала.  
Хĕрхенсе-тĕр мĕнпурне  
Сĕнчĕ ватă ăшшалла.  
Çеп-çемçе икерчĕпе  
Хăналарĕ вăл, сĕтпе  
Чей ĕçтерчĕ кăмăлтан,  
Тем пулать анчах малта?  
Пысăк така тушкине  
Аçтаха тарçи кĕçех  
Хучĕ те çатма çине,  
Ăшаларĕ пикенсех.  
Кам валли-ши ку апат?  
Хуçа валли çак капа!..  
Алăка такам шаккать.  
Карчăк пытанма хушать.  
Кĕнĕ-кĕмен Аçтаха:  
– Фу, çын шăрши кĕрет! – тет, –  
Çынни вара ăçта-ха?  
Халех тытса çиес, – тет.  
– Нимле çын та çуккă, – тет,  
Карчăк ăна ӳкĕтлет, –  
Какай шăрши пулĕ те...  
Така ăшаларăм, – тет.  
– Пур, – тет Аçтаха, – пурах!  
Сак патне тӳрех пырать.  
Кĕç ачасене курать,  
Сĕтĕрсе вăл кăларать.  
Вăрçрĕ тарçине хытах.  
– Ма суятăн? Тăр ухмах!  
Манăн килте кам хуçа?  
Мĕн тăвам-ха тăмпуçа,  
Ак, хăвна хыпса çăтам!..  
Пар-ха çĕççĕме, пусам.  
Хăвăртрах тытса майлам.  
Тарçă хăраса тăмасть,  
Тӳрккесех те калаçмасть:  
– Мĕншĕн васкамалла-ха?  
Ачасем халь ырхан-ха.  
Ĕлкĕрĕпĕр-ха ыран.  
Кĕрĕç вĕсем сан пыра...  
Апат хатĕр, çи ларса.  
Ывăнтăн пуль, лар канса!!!  
Леш итлерĕ. Пуçтарса  
Ачасене чăлана  
Питĕрессĕ çăрапа.  
Кун пек шанчăклă çапах.  
Аçтаха апат çиет,  
Çăвар тулли çавăрса.  
Алтăрпа эрех ĕçет,  
Унтан каять çывăрса.  
Харлаттарать – çĕр чĕтрет,  
Чăлана та илтĕнет.  
Ачасем сиксе чĕтреç,  
Çывăрма та шикленеç.  
Çапах ыйхă çĕнтерет –  
Улăм çине тӳнтерет.  
Пӳрнеске çеç çывăрмасть.  
Тухса тарма май шырать.  
Алăк хăйпăнчăк. Аван!  
Савăнчĕ çавăнпалан.  
Алăк хушшинчен тухса,  
Аçтаха патне килет.  
Чăлан уççине салтса  
Хăй çумне хуллен илет.  
Алăка ача уçать,  
Пурне те тухма хушать.  
Çулсăр-мĕнсĕр вăрманпа  
Чупрĕç вĕсем ушкăнпа.  
Чупнă майăн Пӳрнеске  
Курах кайрĕ тĕмеске.  
Пасăр курнă вăл ăна –  
Килсе кĕрсен вăрмана...  
Эппин, кунтан килелле  
Вĕсем çула пĕлмелле!..  
Чупрĕç вĕсем васкаса  
Килнелле – Анаткаса...

Аçтаха кĕç вăранать,  
Анасласа карăнать.  
Чăлана тухса пăхать:  
Никам та çук, пуш-пушах!  
Мĕн амакĕ, мĕн хурах!  
Ăçта кайнă шельмăсем?  
Шанчăк пĕтмен, вăл пурах:  
Кăшкăрать хай Аçтаха,  
Карчăка такка-такка:  
– Ăçта манăн атăсем?!  
Пĕрре пусса çич çухрăм  
Каякан аттисене  
Тăхăнать те вăл туххăм,  
Чупать тытма лешсене.  
Тусем урлă, пĕлĕтпе  
Вĕçсе пырать шур хур пек.  
Ачасем Аçтахана  
Асăрхарĕç таçтанах.  
Вĕсем ларчĕç пытанса  
Пăхса тăраç шăпланса.  
Аçтаха, ывăннăскер,  
Ак, шутлать ларса канма.  
Лĕпĕçрех ĕшеннĕскер,  
Тытăнчĕ çӳлтен анма.  
Илчĕ сывлăш çавăрса–  
Кайрĕ лĕштĕр çывăрса.  
Пӳрнеске тетĕшсене  
Килне ăсатса ярать.  
Хăй Аçтаха аттине  
Хывса илмешкĕн каять.  
Аттисене – вăшт кăна –  
Тăхăнать те – шăп кăна!  
Çичшер çухрăм ыткăнать  
Пусмассерен – чуп кăна!..  
Ача вĕçрĕ ыткăнса,  
Часах пулчĕ вăл килте.  
Ашшĕ-амăш савăнса  
Йĕре-йĕре кулчĕ те...  
Ыйтрĕç вĕсем касăру...  
Çук, пулмарĕ шăр-шару...  
Пиччĕшсем, ак, ерипен  
Çурта кĕчĕç йĕркипе.  
Шăкăл-шăкăл калаçса,  
Хĕпĕртеççĕ чуптуса.  
Пӳрнескене юратаç,  
Аçтаха çинчен ыйтаç.  
– Аçтаха-и – утаймасть.  
Текех пӳтсĕр пулаймасть,  
Çук ун халĕ аттисем,  
Акă, асамлăскерсем!  
Маншăн ĕçлĕç атăсем –  
Выçă лармĕç ватăсем!

Пӳрнеске кĕрет ĕçе.  
Ялтан хулана вĕçет.  
Хуларан яла килет,  
Çырусем илсе çӳрет.  
Çитерет хыпар-хăнар.  
Пур çĕрте те вăл вăр-вар.  
Укçине илет аван –  
Пулăшать вăл ытлаван...  
Туслă, тет, пĕртăвансем,  
Хурлăхсăр тинех вĕсем.  
Ашшĕ-амăш савăнать -  
Ĕçĕ халь вĕсен ăнать.  
Пӳрнескене пит мухтаççĕ –  
Халь те тутă пурăнаççĕ!

### Учителе

Кунĕ-кунĕпе тăратăн  
Ăшшăн çеç пăхса.  
Çуламлă вăй-ăс паратăн  
Чунтан тăрăшса.

Мĕн чул тӳсĕм, вăй хуратăн  
Вĕрентме пире.  
Яланах пулма хушатăн  
Чунсемпе хитре.

Куçунтан пăхса ларатпăр –  
Кашни сăмахна  
Чĕре варрине хуратпăр,  
Ĕненсе сана.

Ахаль мар сана: «Çын чунĕн  
Инженерĕ», – теç.  
Сан çинчен-ске çĕрĕн-кунĕн  
Юрăсем вĕçеç.

Пур çĕре çитсе пăхсан та  
Тивĕçӳ пур сан:  
Ӳсет летчик, космонавт та  
Эс панă ăсран.

Пĕчĕкçеççĕччĕ – килтĕмĕр  
Нимех те пĕлмен.  
Сехетсерен, вĕт, ӳсрĕмĕр –  
Хамăр та сисмен.

Вăхăт çитĕ те кайăпăр  
Инçе вĕçеве...  
Савнă çĕршыва парăпăр  
Хамăр пĕлĕве.

Хуть ăçта каяс пулсан та  
Аякка санран,  
Яту санăн нихăçан та  
Тухмĕ асăмран.

*1967 çул, сентябрь.*

### Ырă кукамай

Кукамайăм, кукамай,  
Ытла та сан ĕç нумай.  
Алса-чăлха çыхмалла.  
Пире те сан пăхмалла.

Кукамайăм, кукамай,  
Аван-çке санпа пĕрмай.  
Апат-çимĕç хатĕрлен,  
Юмахсем те вĕрентен.

Кукамайăм, кукамай,  
Ларса кан-ха, сăмах май.  
Юрă юрласа парам,  
Хăш-пĕр ĕçне хам тăвам.

*1980 çул, июль.*

### Хĕрлĕ чечек

Пирĕн сурт кантăкĕ çинче  
Ешĕл курăк çитĕнет.  
Унăн çепĕç çулçисенче  
Çут хĕвел шевли çиçет.

Эпир хамăр ăна лартнă,  
Анне кунне кĕтнĕ май.  
– Хăвăрт ӳс! – тесе васкатнă,  
Шыв та сапнă пĕрех май.

Тăрăшнине туйнă тейĕн,  
Курăк çурчĕ чечекне.  
Анне чунĕ хĕпĕртейĕ –  
Пулĕ пирĕнтен парне.

Пилĕк юплĕ çăлтăр евĕр  
Çурăлчĕ чечек хитре.  
Анне сăнĕ ĕмĕр-ĕмĕр  
Пулĕ пирĕн чĕрере.

*1980 çул, апрель.*



© ***Кристина ВАСИЛЬЕВА*** (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) **ӳкерчĕкĕсем.**

ПРЕМЬЕРА

# Мухтава тивĕçлисем те, тăшмансем те хамăр хушăрах...




***«Çапăçура пулмасăр пурнăç хакне чухлаймăн», – тенĕ ваттисем. Тен, чăннипех те, çапла? Сăмахăм вăрçăри çапăçу пирки кăна пымасть. Кулленхи ырăпа усал кĕрешĕвĕнче те вĕçĕмсĕр суйлав тума тивет-çке-ха. Хури е шурри енче-ха эпир? Мĕн е кам хĕтĕртет пире пĕрешкел лару-тăрурах тĕрлĕрен хăтланма? Нуша кулачне астивмен, тăварлă куççульпе чыхăнман çын теприн тертне ăнланайĕ-ши, ун хуйхине чĕре çывăхне илсе ăшă сăмахпа та пулин пулăшайĕ-ши? Иккĕленӳллĕ... Чылай чухне унашкаллисем пурнăçа та, этеме те хаклама пĕлмеççĕ. Пĕтĕм тĕнче вĕсен тавра çаврăннăн туйăнать каппайчăксене. Палăртнă тĕллев патне çитессишĕн вара тем тума та хатĕр...***



## Ăçта иксĕлнĕ чун ăшши?

Мĕншĕн пуçларăм-ха ку калаçăва? Иртнĕ эрнере Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ куракансене черетлĕ премьерăна пуçтарчĕ. Анатолий Хмытăн «Çерем çинчи çиçĕм» пьеси тăрăх лартнă трагикомедие Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалланă. Пьеса редакторĕ, спектакле лартаканĕ – Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Вячеслав Оринов, ӳнерçи – Лариса Комиссарова, çутă ăсти – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Федор Николаев, музыкине йĕркелекенĕсем – Василий Николаев тата Антонина Ягупова.

Фронтовиксем, вăрçă асаилĕвĕсем, историри паллă пулăмсене асăнни – йăлт пур спектакльте. Анчах ку пĕр енĕ кăна-ха. Унти ĕç-пуç синкерлĕ вăрçă вăхăтĕнче пулса иртмест. Юнлă çапăçусем вĕçленнĕренпе вуншар çул иртнĕ. Çакă кăсăклă та. Аслă тата каярах килнĕ ăрăва пĕр-пĕринпе танлаштарсассăн шалт тĕлĕнетĕн: мĕншĕн çапла расна-ха вĕсем? Тăван çĕре хӳтĕлесе пурнăçа та шеллемен ватăсен ачи-пăчи мĕншĕн кăнттам, çăткăн? Ăçта иксĕлнĕ чун ăшши?

Ялти тăлăх мучи Тăм Мирун /Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ Василий Павлов/, сăмахран, никама та усал туман. Анчах ял пуçлăхĕ Кăтра Тимухха /Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Владимир Григорьев/ ăна пĕр çутă кун кăтартмасть темелле. Шав ваттисен çуртне ăсатасшăн ăшталанса çӳрет. Мучи вăхăтра укçа тӳлеменшĕн вара çутта та чарса лартать. Ку çеç те мар-ха, ватта темĕн те пĕр каласа хăртать, тĕксе яма та именсе тăмасть. «Саккуна пăхăнтарса пырасси – манăн ĕç», – тесе хăйĕн кирек мĕнле тӳрккеслĕхне те тӳрре кăларать. Сурăх тирĕ витĕннĕ кашкăр евĕр Кăтра Тимухха. Хăйне кирлĕ çынсемпе япшар калаçма пĕлет-ха вăл. Хĕвĕнче вара чул катăкĕ хатĕр тăрать. Ăна усă кӳме пултарайман çын, ун шучĕпе, тен, хисепе те тивĕç мар.

«Çынран кулсах çын пултăр ĕнтĕ», – тет хурланса Тăм Мирун. Çавнашкалах «çын пулнисен» шутĕнче Кăтра Тимуххан «хӳрешкисем» – Тăхлан /Николай Тарасов/, Тимур /Виталий Сергеев/ тата Лизук /Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Ольга Почалкина/. Тăхлан калаçнă чух та йытă пек хăрхар вĕрсе çеç пуплет. Хусканăвĕсем те йăрт-ярт. Пуçне килнĕ шухăша пăлт-палт персе ярать, çынна кӳрентересрен шикленни ют ăна. Пĕр-пĕр киревсĕр ĕçе хутшăнма вара яланах хатĕр.

Тимур та пачах та ырă ĕçсен командин ертӳçи пек мар. Шалпар шăлавар, кепка, ахăрашу-шуйхашу – акă вăл паянхи «паттăр». Йăкăл-якăл, намăсланма пĕлмен Лизук та кунтах ĕнтĕ. Юлташĕсем ăна та хурахла ĕççене явăçтараççĕ. Тĕрĕссипе, вăл хăй те хирĕçлемест. Каярахпа ял пуçлăхĕн секретарĕ пулса тăрать-ха тата!

Юрать-ха, Арлан культура ĕçченĕпе /Василий Николаев/ Марине учительница /Наталья Шамбулина/ пур. Вĕсен ăнтăлăвĕпе хастарлăхĕ ырă шанăç тĕппипех сӳнменни çинчен çирĕплетеççĕ.

## Аслисемпе ăслисен е ваттисен канашĕ?

Аслă ăру вăрçă вучĕ витĕр тухнă. Выççине те, хуйхине те пайтах тӳссе ирттернĕ вăл. Пĕрле çапăçнă тусĕсене те çухатнă, ачасем ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнине те курнă... Анчах пурпĕр хуçăлман, кăмăлĕпе çирĕпленнĕ кăна. Тен, шăпах çак парăнманлăх пулăшать те вĕсене паянхи саманара? «Террористсем хамăр хушăрах. Çавăнпа та тимлĕхе нихăçан та çухатмалла мар», – тет Марине. Çапла тăваççĕ те ватăсем. Вĕсен никам çине шанмалли те çук. Пурнăç опычĕ пулăшсан çеç...

Спектакль тăршшĕпех-тĕр ватăсене вĕсен çулĕсем çине тĕллесе кăтартса «вилме маннисен» шутне кĕртеççĕ çамрăксем. Хисеплĕ мучисемпе кинемей епле килĕшейĕç-ха пуçтах яш-кĕрĕмпе? «Ваттисен çуртне кайса пурăнма эп ватă çын мар!» – пат касса татать Тăм Мирун. Унăн хăйĕн кил-çурчĕ, хуçалăхĕ, качаки... Ăçта кайтăр-ха вăл?

Укахви кӳршĕ карчăкĕ /Чăваш халăх артистки Лидия Красова/ те авă качака усрать. Ун пиркиех часчасах Яппун Кулипе харкашмалли тупăнать кинемин. Кичем пулнăран çеç сăмах купи айне тăваççĕ ĕнтĕ пĕр-пĕрне. Чăннипе, тахçанах пĕр-пĕрне çилленме пăрахнă-тăр вĕсем. Яппун Кули вара халĕ те шанăçпа кун кунлать: вăрçă вăхăтĕнче çухатнă йăмăкĕпе шăллĕне тупма ĕмĕтленет.

Кăтра Тимухха ашшĕ Сăхман Сахрунĕ те чунĕпе çамрăк-ха. Илемлĕ хĕрарăмпа юнашар утма яланах хавас вăл. Хăйĕн хăлхи чиперех илтмест пулин те хытăрах каласан: «Мĕн кăшкăратăн? Эпĕ хăлхасăр мар!» – тет.

Тăм Мирунне, Укахвие тата Яппун Кулине часчасах пĕрле курма пулать.

– Ан хумхан, çăкалăх,
Ан хумхан, сирень.
Халь ăçта-ши, тусăм,
Эс иртсе çӳрен? – шăрантараççĕ вĕсем. Аслисемпе ăслисен канашĕ шӳтлеме те ăста. «Çерем çинчи çиçĕме курма тухса лартăмăр», – тет Яппун Кули. Ку çиçĕме вĕсене Кăтра Тимухха кăтартать...

Чунĕ кӳтсе килнĕ самантра çапла калать Мирун мучи: «Мĕн туса пурăнатпăр? Кама валли? Çемье, ача-пăча çук. Вилмелле анчах та çав... Анчах çав фашистсене хамран култармастăпах!»

Вăрçă чарăнсан паттăр нумай тесе шахвăртаççĕ халăхра. Чăн паттăрсем пирки вара нимĕн те пĕлместпĕр. Спектакльте те çаплах пулса тухать. Тахçан, 1941 çултах, оккупациленĕ Кейӳ хулинчен Тăм Мирун выçă ачасене партизан отрядне ăсатнăмĕн. Чылай çул иртсен вăл çăлнă Саррăпа /Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Венера Пайгильдина/ Мэир /Леонид Яргейкин/, аппăшĕпе шăллĕ, Мируна шыраса тупаççĕ, ăна курма килеççĕ.

Спектакльте кулăшла самантсем те, чуна витерекеннисем те чылай. Юрă-кĕвĕ ăна тата та пуянлатаççĕ, сăнарсене тарăнрах туйма, ăнланма пулăшаççĕ. Паллах, эпĕ тишкерни – пĕр тĕрлĕ шухăш çеç. Кашни çыннăн хăйĕн курăмĕ. Çавăнпа та вулаканăмăрсене «Çерем çинчи çиçĕм» спектакльпе паллашма сĕнес килет.

Паттăрсем те, тăшмансем те хамăр хушăрах. Çакна манас марччĕ, çынна хисеплеме пĕлесчĕ. Мĕн пуррине, тăнăçлăха упрасчĕ. «Çерем çинчи çиçĕме» вара пурнăçра мар, театрта кăна курасчĕ.

***Ольга АВСТРИЙСКАЯ.***

Тантăш 11
19 №, 2015, май, 7

Антип НИКОЛАЕВ

# ПАТТĂРСЕН ÇЕМЙИ

**(Малалли.
Пуçламăшĕ 13-18-мĕш номерсенче.)**

**Фрол АЛЕКСЕЕВ**



**1941 çул, декабрĕн 27-мĕшĕ.**

*Пĕлтерем: эпĕ сывă-ха, чиперех. Фронта каяс ĕмĕтĕм пурнăçланчех вĕт! Командир мана фронта ярас пирки шантарсах каларĕ. Çав тери савăнатăп уншăн! Сирĕнтен икĕ çыру илтĕм. Хамăр ентешсем фронта мĕн кирлипе пулăшнăшăн савăнатăп. Юлташсенчен кам та пулин пур пулсан – манран салам калăр.*

*Маншăн ан кулянăр. Пире ĕмĕртен ĕмĕрех пурнăçшăн кĕрешме пÿрнĕ пуль çав. Кирек мĕнле пулсан та вăл, пурнăç, хамăр алăра, телее эпир хамăр алăпа тупнă. Анчах куратăр ав, пире телейлĕ пурăнтарасшăн мар фрицсем.*

*Хаклă тăванăмсем, тăшмана хирĕç хаярран çапăçма тупа тăватăп. Командирсем хушнă пек, Коммунистсен партийĕ хушнă пек кĕрешетĕп. Маншăн намăслантармалла пулмĕ сирĕн.*

*Сире те, хамăр ял çыннисене те фронта тата ытларах пулăшма сĕнетĕп. Эсир пулăшни кунта пире питĕ кирлĕ.*

**1942 çул, январĕн 6-мĕшĕ.**

*Сывă-и, юратнă аннесĕм!*

*Чылайранпа çырманшăн каçар. Эпĕ айăплă мар уншăн, вăхăчĕ çавнашкал пулчĕ.*

*Пĕр-ик сăмах хам çинчен. Çырнăччĕ ĕнтĕ: малтанхи пекех эпĕ отделени командирĕ. Çапăçура вара отделени командирĕ вăл вирлĕ вăхăтри генерал пекех. Пурне те хăвăн тумалла!*

*Сичĕ кун хушши малти позицире, нимĕçсенчен пĕр виççĕр метрта çеç пултăм. Эпир уçă вырăнтах пытанкаласа тăтăмăр. Унта эпĕ питĕ вăйлă пăтранчăка кĕрсе ÿкрĕм. Мĕнле майпа сывă юлнă – хам та тĕлĕнетĕп. Вилĕмĕ манран пĕр вунă сантиметрта çеç иртсе кайрĕ. Акă тата артиллери пенĕ чухне снарядсем пирĕнтен ик-виç метртах ÿке-ÿке çурăлчĕç, пире вара юрпа, çĕрпе хупласа хучĕç.*

*Взвод командирĕ ман отделение чи йывăр та ответлă операцисене ярать. Уншăн эпĕ мухтанатăп, хушнă ĕçе вăхăтра та тĕрĕс пурнăçлама пĕтĕм вăйран тăрăшатăп.*

*Юратнă аннесĕм! Сан сăмахусене, пехилÿсене кунне миçе хутчен аса илместĕп-ши? Уйрăмах мана санăн юлашки çырăву хумхантарчĕ. Эпĕ вара ирĕксĕрех иртнĕ кунсене аса илтĕм...*

*Эпĕ сана яланах ăнланнă, пулăшма тăрăшнă. Анчах килтен аякра пулни, мăнкăмăллăх, чăрсăр характер тени чăрмантарчĕ пуль çав. Ăнлан мана, анне, çынна хÿтĕлĕх кирлĕ: хура-шур нумай курса тÿснĕ çынна та... Çук, йывăр самантра çумра яланах тепĕр çын, санран çирĕп кăмăллăрахскер, пулмалла тесе каласшăн мар эпĕ... Ăша лăплантармалли юлташ кирлĕ тесе каласшăн. Сана ăнланакан, хавхалантаракан çын пултăрччĕ вăл. Ун пеккине вара саншăн çывăх çынсем хушшинче çеç тупма пулать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ эсĕ, юратнă аннесĕм, халĕ ман чунчĕрешĕн чи хакли.*

*«Çырмалли нумай ман сана, эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм», – тетĕн эсĕ. Ăнланатăп, аннесĕм. Сисетĕп санăн чĕрÿ вăрканине, эсĕ тунсăхланине, шикленнине. Эх, пуласчĕ ман хаÿ сапа юнашар, хăпартлантарасчĕ сана, анчах... Сăмахăмсем вара кичем те кăнттам, манăн шухăш-кăмăлăма ниепле те веçех уçса кăтартаймастăп.*

*Унччен эпĕ аннене чĕререн юратнине, кăмăлланине палăртсах кайман – характер çавнашкал-çке-ха. Анчах «анне» сăмах маншăн темле таса та асамлă сăмах шутланнă, халĕ те çапла шутланать. Ăна чĕрепе çеç туйса илме пулать.*

*Эсĕ, аннесĕм, яланах манпа пĕрле...*

*Сана хыттăн чуптăватăп. Фрол.*

**1942 çул, июнĕн 18-мĕшĕ.**

*Отделени командирĕ Клеменов юлташ тата Козловский хĕрлĕ армеец тăшман тылне кĕрсе нимĕçсен 16 салтакĕпе 2 офицерне вĕлернĕ. Харсăр боецсем пĕр фрица тыткăна илнĕ, хаклă документсем тупса тавăрнă...*

*Çакăн çинчен эсир хаçатсенче вуланă та пулĕ. Совинформбюро та пĕлтернĕччĕ. Çав хастар салтаксем пирĕн ротăран. Эпир пурте вĕсем пек пулма тăрăшатпăр. Шел, хаçат паттăрла ĕçсем çинчен пĕтĕмпех каласа параймасть. Тен, ман çинчен те пĕрпĕр япала илтнĕ пулăттăрччĕ...*

Мĕн çинчен каласшăн пулнă-ши Фрол хăйĕн тăванĕсене? Çак вăрттăнлăх СССР Оборона министерствин Архивĕнче пулнă хыççăн аванах палăрчĕ.

...Хаяр çапăçу пынă. Нимĕçсем пĕр тÿпем çине çирĕпленсе ларнă та тăтăшах атакăланă. Рота командирĕ вара çапла йышăннă: тăшмана флангран пырса çапмалла. Хамăр флангсемпе тыла хÿтĕлеме вăл Фрол Алексеев сержант ертсе пыракан пулемет расчетне хăварать.

Мал енчен сайрарах пеме тытăннине сиссе, нимĕçсем хăйсене тин çеç атакăланă подразделение тапăнма пуçланă. Фашистсем вырăнтан вырăна чупса куçни те курăнать ĕнтĕ. Алексеев çакна тимлĕн сăнаса тăнă. Меллĕ самант кĕтнĕ вăл – ăшалас-тăк ăшалас вĕсене!

Пулеметчиксенчен пĕри фрицсене шутлама пикеннĕ.

– Халех иртерех-ха, – кулкаласа илнĕ Фрол. – Ак атакăна çĕкленччĕр çеç – ун чухне шутлăпăр вара...

Тепĕр темиçе минутран нимĕçсем хăйсен траншейинчен çĕкленнĕ те пирĕн позицисем еннелле васканă.

– Куратăр-и, мĕн чухлĕн вĕсем? – хушса хунă Алексеев сержант. – Анчах пĕлĕр, ирсĕрсем, эпир каялла чакмастпăр.

Тăшман çывăхрах ĕнтĕ.

– Эх, лектереп те халь шуйттансене, – шăлĕсене шатăртаттарнă Фрол. Унтан пулеметран пеме пуçланă.

Фрицсем чарăннă, ун-кун пăхкаласа илнĕ те, пĕшкĕнсе, каялла тапса сикнĕ. Вунă виле ытла çаплипех выртса юлнă.

– Лайăххах сăнăр. Тăшман халь пире ик енчен те хупăрласа илме тăрăшĕ, – асăрхаттарнă сержант боецсене.

Чăнах та, çапла пулса тухнă.

– Иртеймĕр! – кăшкăрнă Фрол. Малтан сулахай еннелле, унтан хăвăрттăн сылтăмалла вут сапнă вăл. Гитлеровецсем хальхинче те каялла чакнă, текех чăтайман.

Кăшт вăхăт иртсен нимĕçсем каллех атакăна çĕкленнĕ. Шăп çак самантра ĕнтĕ ротăн тĕп вăйĕсем тăшман тылне атакăлама пуçланă. Фрол пулемечĕн вăрăм черечĕпе пĕрле автоматсен шатăртаттарни илтĕнсе тăнă. Çапăçу хирĕнче хăватлăн «урра» янăраса кайнă...

Фрол Алексеев ятне «Боевая слава» ятлă нумай тиражлă хаçатра та асăннă. 1942 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче пичетленнĕ «Штыкпа та, прикладпа та» заметкăра çапла каланă:

«Çапăçу çĕрĕпех чарăнмарĕ. Ирхине, пилĕк сехетре, нимĕçсем, хăйсен мĕнпур вăйне пухса, вуннĕрмĕш хут контратакăна çĕкленчĕç. Ку чи вăйлă атака пулчĕ. Сухату нумай тÿсрĕ пулин те, тăшман пирĕн траншейăсем патне сĕкĕнсе кĕчĕ-кĕчех. Алă вĕççĕн çапăçма тытăнтăмăр.

Шăп çакăнта палăрчĕ те ĕнтĕ вырăс штыкĕн вăйĕ. Пирĕн салтаксем, çав тери хаярланса кайса, пуçтах тăшмана çĕмĕрме тытăнчĕç. Уйрăмах çамрăк совет воинĕ Николай Ермолин аслă сержант ăста та хастар çапăçрĕ. Хăюллă командир икĕ е виçĕ нимĕçе харăсах тытăçма та шиклемесе тăмарĕ. Пĕрне штыкпа чиксе пăрахать, тепĕрне кĕтмен çĕртен прикладпа минретет, виççĕмĕшне каллех штыкпа лектерет.

Ермолинран унăн юлташĕсем те юлман. Николай Курносенко рядовой штыкпа та прикладпа 4 фрица, Фрол Алексеев сержант 2 фрица пĕтерсе тăкаççĕ.

Вĕсемпе юнашар Люляков парторг хăюллăн çапăçнă, вăл 4 нимĕçе леш тĕнчене ăсатнă.

Фрицсенчен сахалăшĕ çак кĕрешÿре хăтăлса юлма пултарчĕç. Вĕсем виличченех вырăс штыкне манмĕç ĕнтĕ.

Аслă сержант С.Барановский.»

Тен, çак çапăçу хыççăн Фрол килне çырса янă пулĕ:

*«...Вăрçă, хаяр вăрçă чарăнмасть-ха. Кашни кун тытăçу пулса иртет. Пĕлесчĕ сирĕн вăл мĕн иккенне! Ку вăл çапăçу аслатийĕ, юн тинĕсĕ тата курайманлăх океанĕ.*

*Кашни кунах сиртен çыру кĕтетĕп.»*

**1943 çул, июлĕн 12-мĕшĕ.**

*Юратнă Любаша!*

*Маншăн ан пăшăрхан. Эпĕ сывах. Снаряд осколокĕ кăштах чĕрсе иртни нимех те мар. Халĕ Курск хулинче. Тепĕр темиçе кунран чаçе каятăп. Унта хăвăртрах çитмелле. Çапăçас, тăшмана çĕмĕрес килет. Орел хулине илнĕ çĕре хутшăнасчĕ. Нимĕçе хамăр çĕр çинчен хăвăртрах хăваласа ярасчĕ.*

**Тепĕр çыру /хăçан çырни паллă мар/.**

*...Любаша, пĕлтересшĕнех марччĕ сана ун çинчен. Пĕлместĕп, киле эп вилни çинчен калакан хут çитнĕ-и, çитмен-и? Ярасса янă вара, мана вилнех тесе шутланă. Эпĕ, хăвах куран, чĕрех, сан пата та çыратăп. Эпĕ сывă юлнă тесе никам та шанман, темле чĕрĕ юлтăм – тĕлĕнмелле!*

*Çапла çав, ман юратнă Любаша. Кун пек самантсем нумай пулаççĕ. Каласа пама пулать, анчах çырма аванах мар. Эсĕ ху та хаçатра Поныри станцийĕнче пулнă çапăçусем çинчен вуланă пулĕ? «Тигрсем» пирĕн çинелле пырсан та, пĕри те каялла çаврăнса пăхмарĕ. Ну, юрĕ, хальлĕхе çитет. Тăтăшах çыр. Ман пиччешăллăмсем мĕнле пурăнаççĕ?*

**1943 çулхи августăн 17-мĕшĕ.**

*Тĕлĕнмелле ыйту панă эсĕ: «Туртма пăрахрăн-и?» Мĕнле майпа пуçа пырса кĕчĕ ку? Эпĕ туртма та чăнласа артиллери вучĕ айĕнче пĕр сехет çурă ларнă хыççăн пуçларăм. Табак нервăсене тÿрех лăплантарчĕ. Ун чух нерв вăйсăр пулнă. Халĕ ĕнтĕ вилĕмрен хăраса тăмастăп. Снарядсемпе минăсем çывăхрах ÿкнине хăнăхнă. Нумайлăха шăплăх тăни вара тĕлĕнтерсех ярать.*

*Халĕ, Любаша, ирсĕр çĕленсене анăçалла хăвалатпăр. Кунсерен тăван çĕре районĕ-районĕпех ирĕке кăларатпăр. Çĕр çинче те, сывлăшра та халиччен тĕнче курман çапăçусем пыраççĕ.*

*Умри горизонт пушар çутипе хĕрелет. Çĕр кисренсе тăрать, пиншер нимĕç вилли çул айккинче выртать. Эпир, çĕнтерÿçĕсем, халăхсене ирĕке кăларакансем, анăçа васкатпăр...*

*Нимĕçсен пусмăрĕнчен çăлма чĕнекен авалхи вырăс хули патĕнчен сан пата Фрол салам ярать.*

**1943 çул, сентябрĕн 6-мĕшĕ.**

*Сывă-и, савнă Любаша!*

*Паян санран тăватă çыру, сăнÿкерчĕк илтĕм. Çав тери хитре эсĕ. Сăнÿкерчĕке пăхсан, чĕрене тем хĕссе илет, каялла тавăрма çук кунсем, пире тĕтĕмре пытарнă çуллахи лăпкă каçсем аса килеççĕ. Иккĕн пĕрле ирттернĕ вăхăта манма çук. Телейĕмĕр кĕске пулчĕ çав. Именчĕксем, мана чи лайăх кунсем парнелерĕн. Халь тата ытларах хаклатăп хамăрăн юратăва. Паян пирĕн ĕлĕкхи çинчен аса илмелле, пуласси çинчен ĕмĕтленмелле кăна...*

**1944 çул, мартăн 7-мĕшĕ.**

*Çапăçу çук чухнехи лăпкă вăхăтпа усă курса, сана пĕр-ик йĕрке çырса пĕлтерес терĕм. Çак лăпкăлăх нумая пымасть, сире кашнине уйрăмшăн çырса ĕлкĕрме те çитмĕ. Çавăнпа та тăвансем валли çыратăп. Çак çыру çинчен аннене те пĕлтер вара.*

*Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе саламлатăп сире, тăванăмсем. Уяв каçне лайăх иртермелле пултăр. Ун чухне шухăшăмăрсемпе пирĕн пата, малти ретри окопа, çитсе курăр, маншăн черкке çĕклĕр. Эпĕ кунта Тăван çĕршыв çинчен, сирĕн çинчен шутласа тăратăп. Шухăшлама мана мина е пуля шăхăрса иртни те чăрмантараймасть. Йывăр, питĕ йывăр вăрманлă-шурлăхлă вырăнта наступление кайма – ун пек çĕрте хÿтĕленме çеç аван.*

*Ĕнер эпĕ ентеше тĕл пултăм. Эпир çĕнĕ вырăна куçаттăмăр, иртсе пыракан салтакран эпĕ: «Машинăсен ушкăнне курман-и?» – тесе ыйтрăм. Ответлес вырăнне вăл хăй ыйтрĕ: «Эсĕ чăвашран-и?» Каласса кайрăмăр. Фронта вăл Калинино районĕнчен килнĕ иккен.*

*Чĕрĕ юлсан, фронтра курни-илтни çинчен сана кăна мар, хамăр ачасене те, мăнуксене те веçех каласа кăтартатăп. Çавнашкал хаяр хăрушлăха вĕсем урăх ан курччăр.*

*Умра – юлашки, анчах чи йывăр утăм. Тата темиçе уйăхран Россия ирĕклĕн сывласа ярĕ, ирĕклĕхпе телейлĕ пурнăçшăн пыракан кĕрешÿ тинех вĕçленĕ.*

*Любаша! Манпа мĕн те пулин сиксе тухсан, ĕçри юлташсене пурне те кала: пирĕн совет çыннисем, халăхсен туслăхĕпе пĕрлешнĕскерсем, çапăçура яланах малта пулнă. Тăван çĕршыва хăюллăн хÿтĕленĕ. Çакна эпĕ вăрçă вăхăтĕнче хам куçпа хам куртăм.*

## Михаил Гнидин асаилĕвĕсенчен

М.Гнидин – Фрол Алексеевăн фронтри тусĕ. Вĕсем пĕрле Мускавран Варшавăна çитнĕ. Михаил Гнидин, паллах, пулемет расчечĕн командирĕ пулнă Фрол Алексеев çинчен чылай пĕлет. Акă мĕн аса илет вăл:

...Тĕттĕм те лăпкă каç. Пурте атакăна кайма сигнал пуласса кĕтеççĕ. Шăрпăкмĕн çутман. Табак тавраш туртмастпăр. Каласма та шăппăн çеç калаçатпăр.

Акă, батальон умĕнче, малта, çулăм ялтăртатса илчĕ. Пушар вучĕ тÿпене çутатрĕ. Унччен те пулмарĕ тăшман çине артиллери залпĕсем вирлĕн тăкăнма пуçларĕç. Сылтăмра та, сулахайра та çĕр юписем çĕкленеççĕ.

– Пирĕн пушкарьсем ĕçлеççĕ, – хавхаланса пĕлтерчĕ Алексеев сержант, – пире вутпа пулăшаççĕ. Малалла йĕркеллĕ пулать. Халь фрицсене ăшалантаратпăр ĕнтĕ.

– Мĕнпе? Пулеметпа-и? – тĕксе илчĕ пĕр пехотинец.

– Шÿтлессе шÿтле те, мĕнле шÿтлемеллине те пĕл, – хуравларĕ Фрол. – Çапăçу вăхăтĕнче манпа юнашар пулма тăрăш-ха. Курăн вара пулеметчиксем мĕн тума пултарнине.

Тÿпене темиçе ракета хăпарса çуталчĕ. Сулахай флангран, пĕчĕк тĕмеске патĕнчен, пĕр пулемет таклаттарать. Унтан кăшт аяккарах тупă кĕрĕслеттерме тытăнчĕ. Инçех те мар темиçе снаряд ÿксе çурăлчĕ.

Батальон командирĕ пистолет туртса кăларчĕ те команда пачĕ:

– Хатĕрленĕр! Ман хыççăн – малалла!

Хăй вара пуринчен малтан атакăна çĕкленчĕ. Атакăлакансем хушшинче Алексеев та хăйĕн юлташĕсемпе пычĕ. Вăхăт-вăхăт чарăнса тăрса, тăшман йăвине пĕтерсе тăкать те каллех малалла чупать.

Пирĕн салтаксем тÿпем патне çитрĕç. Гитлеровецсем урса кайсах переççĕ – выртма тиврĕ. Батальон хÿтĕленме хатĕрленчĕ.

Эпĕ сехет çине пăхса илтĕм. Тăватă сехет. Апла пулсан, çапăçу виçĕ сехет хушши пырать ĕнтĕ. Вилнисем те, аманнисем те пур. Алексеев сержант хулпуççийĕнчен юн сăрхăнать. Вăл çирĕме яхăн гитлеровеца тĕп турĕ, хăй те аманчĕ.

Унччен те пулмарĕ батальон командирĕ ура çине çĕкленчĕ:

– Коммунистсем! Малалла! Урра!

Комбатпа юнашар Алексеев сержант та тăшмана хирĕç ыткăнчĕ. Пирĕн салтаксем фашистсен пĕрремĕш траншейи патне çитрĕç. Фрол унта умлă-хыçлă икĕ граната ывăтрĕ. Çавăнтах унтан инçех те мар взрыв кĕрĕслетрĕ.

...Фрол Алексеев çĕрле тин тăна кĕчĕ. Пуçне çĕклерĕ – кăкăр хыттăн ыратрĕ.

– Шыв!

Ун патне шурă халатлă хĕрача пырса тăчĕ.

– Ăçта эп? – шăппăн пăшăлтатрĕ Фрол.

– Ан пăшăрханăр. Эсир медсанбатра... Тÿпем пирĕн алăра.

Фрол Алексеева госпитале ăсатрĕç. Унтан вăл килне таврăннă.

**(Малалли пулать).**

# Хавасла 2015 самант

## «Çĕнтерӳçĕ-салтак» сăмахкаçмăш





**Сылтăмалла:** 5. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи партизансен паллă пĕрлĕхĕн çарпуçĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ. 6. Улатăрта çуралнă паллă çар техникин конструкторĕ, уйрăмах вăл ăсталанă пистолет-пулемет /ППС-43/ вăрçăра хăйне лайăх енчен кăтартнă. 9. Маршал, тăватă хут Совет Союзĕн Геройĕ. 11. Вăрнар районĕнчи Мăн Явăшра çуралса ӳснĕ, стрелковăй дивизинче старшина пулса çапăçнă Совет Союзĕн Геройĕ. 14. Ленинград /халĕ Санкт-Петербург/ облаçĕсенчи вăрçă çулĕсенче Пурнăç çулĕ çинчи легендарлă ял. 15. Хĕрлĕ Чутай районĕнче çуралнă, «Катюша» орудийĕнчи чи малтанхи ракетчикĕсенчен пĕри. 18. Винтовка, автомат пайĕ. 19. Çар карапĕ. 23. Вырăс совет писателĕ, Нобель премийĕн лауреачĕ, çырса вĕçлемен «Они сражались за Родину» роман авторĕ. 25. Совет лейтенанчĕ, Францин наци геройĕ, Совет Союзĕн Геройĕ. 26. Чăваш летчикĕ, Совет Союзĕн Геройĕ. 27. Улатăр районĕнче çуралса ӳснĕ летчик, Совет Союзĕн Геройĕ. 28. Вăрçăра пуçне хунă чăваш писателĕ.

**Аялалла:** 1. Çар çыннин çи-пуçĕн пайĕ. 2. Вăрçă вăхăтĕнчи Совет çарĕн хăватлă орудийĕ. 3. Вырăс совет поэчĕ, «Бьется в тесной печурке огонь…» юрă тексчĕн авторĕ. 4. Вăрçăри хăюллă, хастар паттăр. 7. Сталинграда хӳтĕлесе палăрнă çарпуçĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ. 8. Паллă çар конструкторĕ, тĕрлĕ артиллери хатĕрĕсене ăсталанă генерал-лейтенант, инженер. 12. Паллă çарпуçĕ, Варшава килĕшĕвне ертсе пынă арми генералĕсенчен пĕри. 13. Болгарири хула, унта вырăс салтакне, «Алешăна», палăк лартнă. 16. Вăрçă вăхăтĕнчи легендарлă совет летчикĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ, «В бой идут одни старики» кинофильмри Титаренко капитанăн прототипĕ. 17. Юханшыв урлă кĕске вăхăтра çар çыннисем ăсталакан тимĕр кĕпер. 20. Вăрçăра корреспондент пулнă чăваш писателĕ. 21. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тăватă хут таран мěслечĕпе тăшман самолечĕсене тĕп тунă летчик. 22. Герой-хула. 24. Вăрçăри паттăрлăхшăн панă правительство наградди.

## Пуçватмăш

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи пурнăç пирки Чăваш халăх писателĕ Леонид Агаков «Салтак ачисем» повеçре уçăмлăн çырса кăтартнă. Çак тăватă сăмах урлă ыттисене çырса вырнаçтарăр.**

Алим – Анук – Ахах – Мина – Неон – Нина – Тула – Ютра – Аруба – Иркка – Ичикс – Спика – Абакан – Агаков – Акатуй – Апулей – Армада – Ачисем – Илепер – Качака – Калуга – Килька – Леонид – Салтак – Селиме – Укăлча – Уруков – Шатура.




## «Тăватă сăмах урлă» пуçватмăш

**Вырăс тата Грузи каччисем Егоровпа Кантария Аслă Çĕнтерӳ ситнĕ ятпа 1945 çулта Берлинти Рейхстаг çине ялав çакнă. Çак сăмахсем пуçватмăшра çырăннă та ĕнтĕ. Ыттисене вĕсен çумне çыпăçтарăр:**




Аш – Ом – Ава – Вар – Йог – Ева – Кит – Руа – Сиг – АВВА – Адер – Анка – Арфа – Асав – Ваза – Гиви – Грек – Кипа – Лола – Метр – Нива – ОБХС – Олег – Орша – Отто – Пени – Такт – Урак – Шарм – Штаб – Юпах – Юран – Автан – Дария – Иврит – Инкоу – Кушак – Маржа – Мария – Медео – Наташ – Орион – Офорт – Ренат – Рубка – Тимук – Чатăр – Ăнтăлу – Берлин – Ефрат – Егоров – Иванюк – Лантăш – Монета – Натали – Ратмира – Керкира – Песетто – Рандеву – Ростова – Атланитик – Ванкувер – Кантария – Марасьев – Параграф – Рейхстаг – Тобогган – Нежданова.

## «Икĕ паттăр» пуçватмăш

**Сăмахсене йĕркипе сылтăмалла тĕрĕс çырсан, паллă тунă икĕ юпара тĕрлĕ вăхăтра халăхшăн палăрнă çар çыннисен ячĕ, хушамачĕ, çарти званийĕ вуланĕç.**

1. Пахчаçимĕç. 2. Кăнтăрти улма-çырла. 3 Беларуçри хула. 4. Африкăри юханшыв. 5. Ĕлĕкхи транспорт хатĕрĕ. 6. Чылай чăваш ялĕнчи урам ячĕ. 7. Африкăри çĕршыв. 8. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче музыкăна вĕрентсе пурăннă учитель. 9. «Ой, милый …» юрăри сăмах. 10. Техника енĕпе ĕçлекен специалист. 11. Денис Гордеев хайлавĕ. 12. Авалхи Руç кнеçĕ Александр …



## «Авторĕ кам-ши?» сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 5. К. Турхан çырнă «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романри сăнар. 6. Кинофильм жанрĕ. 9. Иван Яковлев букварьне кĕнĕ чăваш халăх юмахĕ. 12. Хăш-пĕр апат-çимĕç варри, ăшĕ. 13. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă чăваш сăвăçи. 14. Çамрăк йывăç. 17. Çемен Элкерĕн калавĕ. 18. Йывăçпа ĕçлемелли хатĕр. 19. Телевизор пайĕ. 20. Ӳсентăран тĕнчи. 25. Крымри пĕчĕк заливсен ушкăнĕ. 26. Çар техникин, çыннисен ăсталăхне кăтартакан уяв. 27. «Пуш параппан» фразеологизм. 30. Икĕ пайран тăракан шывçи хатĕрĕ. 31. Шухăшлавçă, ăсчах. 32. Чăвашсен ĕлĕкхи вĕрӳ-суруçи.

**Аялалла:** «… çилленсе çил арманĕ лартас çук» /ват. сăм./. 2. Кăнтăр халăхĕсен çӳхе çăкăрĕ. 3. Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминчи сăнар. 4. Чăвашрадио кăларăмĕ. 7. Чăваш ăсчахĕ, сăвăçи. 8. Самолетсем лартмалли вырăн. 10. Раиса Сарпин хайлавĕ. 11. Чăваш апат-çимĕçĕ. 15. Хуралтă пайĕ, вĕрлĕк. 16. Ĕлĕк тырă вырнă чухне усă курнă ĕç хатĕрĕ. 21. Саха /Якутири/ хула. 22. Яков Ухсайăн «Çул» поэминчи сăнар. 24. «… кăвакал кутăн чăмнă тет» /ват. сăм./. 28. Н.Ефремовăн «Пуян Карук» драминчи сăнар. 29. Çурçĕр Кавказри юханшыв.

**Хуравсене тĕрĕс тупсан, паллă тунă клеткăсенче периметр майлă вăрçă çинчен çырнă икĕ хайлав ячĕ вуланĕ. Авторĕ кам-ши?**

*Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.*